Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ийунӗ 10 ЕРНЕКУН
131 (4944) №

# ЧӐВАШ КОММУНӖ

21-мӗш ҫул тухать | ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӑн хаҫачӗ | Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67; Ред. заместителӗн 0—88; Редакци секретарӗн 4—40; Дежурнӑйӑн 6—23

## Комсомол тата суйлав кампанийӗ

Ийунӗн 26-мӗшӗнче Чӑваш республикӗнчи ҫамрӑк гражданӗсем хамӑр тӑван ҫӗршыври пӗтӗм ӗҫсынисемпе пӗрле РСФСР тата АССР Верховнӑй Совечӗсене депутатсем суйлаҫҫӗ. Ҫак кун пиншер ҫамрӑк ҫынсем хӑйсен мухтавлӑ гражданин тивӗҫне пурнӑҫа кӗртме суйлав урнисем патне пыраҫҫӗ. Коммунисссен партийӗ пӑхса ӳстернӗ ҫамрӑксем ҫак кун коммунистсемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн сасӑлаҫҫӗ. Хӑйсен сасӗсене коммунистсемпе партире тӑманнисем пӗрле тӑратнӑ кандидатсемшӗн парса, ҫамрӑк суйлавҫӑсем большевиксен партийӗшӗн, ӗҫсынисене капитал пусмӑрӗнчен хӑтарнӑ, пӗтӗм совет халӑхне пуйан, культурлӑ, телейлӗ пурнӑҫ туса панӑ большевиксен партийӗшӗн, унӑн политикишӗн сасӑлаҫҫӗ.

Совет халӑхӗ хӑйӗн ҫамрӑкӗсене ҫав тери йуратса шанса пахать. РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене депутата суйлама тӑратнӑ кандидатсем хушшинче сахал мар комсомолӗц—рабочисемпе работницӑсем, колхозниксемпе колхозницӑсем, совет интеллигенчӗсем. Акӑ вӗсем: Бычкова Ксенийа Афанасйевна—Тутаркас районӗнчи Атапай йалсовет председателӗ, Данилӑв Василий Данилӑвич — „Страж революции" колхоз председателӗ, орденоносӗц, Йефремӑв Петр Йефремович— Трак районӗнчи Йӗнмурзинӑ колхоз председателӗ, Йефимӑва Александра Йефимӑвна—Ҫӗрпӳ районӗнчи „Ӗмӗт" колхозри ене, ферминчи аслӑ дойаркӑ, Фирсӑва Александра Александрӑвна — Куславкка комбинатӗнчи" работницӑ-стахановкӑ, Харитонӑва Йефросинийа Харитонӑвна- Вӑрнарти машинпа-трактӑр станцинчи трактӑр бригадин бригадирӗ, Иванов Константин Иванӑвич—Чӑваш Государствӑ академи театрӗн директорӗ. Михайлӑва Анна Михайлӑвна—Патӑрйел районӗнчи Пушкин йачӗпе тӑракан колхоз председателӗ, Воронцова Анна Иванӑвна—ПСҪЛКС Шӑмӑршӑ райком секретарӗ, тата ыттисем те. Вӗсем хушшинче ПСҪЛКС Обком секретарӗ Никифӑрӑв Иван Никифӑрӑвич.

Совет халӑхӗ ҫавӑн пек пысӑк шанӑҫ хунипе савӑнса, ҫамрӑк кандидатсем хӑйсене кандидата тӑратнине Ленинла комсомола шанни вырӑнне хураҫҫӗ. „Тӑван ҫӗршыври ытти хӗрсенчен нимӗн те уйрӑм мар епӗ,—тет Ксени Бычкова.—Епӗ Ленинла комсомол членӗ, мана вӑл вӗрентсе ӳстерчӗ".

Депутата суйлама тӑратнӑ ҫамрӑк кандидатсем хӑйсем ҫине хунӑ пысӑк шанаҫа большевиксен партийӗ йертсе пынипе, халӑх ӗҫӗшӗн пӗтӗм вӑйа хурса кӗрешнипе, халӑх тӑшманӗсене — троцкиссемпе бухаринцӑсене, буржуалӑ националиссене, ҫавӑн йышши тата ытти шпионсене, диверсантсене, сӑтӑрҫӑсене хирӗҫ хайаррӑн кӗрешнипе илме пултарнӑ.

Ленинла комсомол партин чи шанчӑклӑ помошникӗ, комсомол—политикла пысӑк вӑй. Халӗхи вӑхӑтра комсомол организацийӗсем умӗнче тӑракан пысӑкран та пысӑк задач вӑл—коммунистсемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн агитацилесси, ҫитес суйлавра коммунистсемпе партире тӑманнисен блокӗ ҫӗнтермеле тӑвасси пулать.

Округсенчи, участкӑсенчи суйлав комиссисенче комсомолӗцсен хисепӗ пысӑк. Комсомолӗцсенчен ҫӗршер доверённӑйсем, пиншер агитаторсем. Вӗсем хӑйсен ӗҫӗсене начарах мар туса пыраҫҫӗ. Акӑ Шупашкар районӗнчи Лапсарти доверённӑй Йегорӑв Роман, агитатор Флегантӑв Иван кандидатсемшӗн суйлавҫӑсем хушшинче агитаци ӗҫне лайӑх организациленӗ. Вӗсем суйлавҫӑсемпе кулленех калаҫусем туса иртереҫҫӗ, пухусенче докладсем тӑваҫҫӗ. Анчах, чылай ҫӗрте комсомол райкомӗсем ҫамрӑк суйлавҫӑсем хушшинче ӗҫлессине тивӗҫлӗ хак памаҫҫӗ ха. Час-часах вӗсем комсомолӗцсем хушшинчен уйӑрнӑ доверённӑйсене, агитаторсене пухса канашлусем иртерме мар, палламаҫҫӗ те.

Сӗнтӗрвӑрри районӗнче, райкомол шутланӑ тӑрӑх, 240 комсомолӗц агитатор пулса ӗҫлеҫҫӗ. Анчах, тӗрӗссине, вӗсенчен ҫурри те ӗҫлемеҫҫӗ. Уйрӑмах Водолей, Пушкин, Ураково пуҫламӗш комсомол организацисем суйлав кампанине начар хутшӑннӑ. Ку организацисенче ӗҫе пуҫӗпех тытӑнман комсомолӗцсем те сахал мар.

Комсомолӑн суйлав кампанине активлӑн хутшӑнмала, суйлав кампани тӗлӗшӗнчен парти иртерекен пысӑк ӗҫре партин чӑн чӑн помошникӗ пулмала. Комсомол организацисен комсомолӗцсемпе союзра тӑман ҫамрӑксен массине ҫамрӑксен хӑйсен сасӗсене коммунистсемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн памали ҫинчен тӗплӗн ӑнлантарса памала. Кашни комсомолӗцӑн, кашни союзра тӑман ҫамрӑкӑн ҫакна лайӑх пӗлсе тӑмала: ҫамрӑксене коммунистсен партипе совет влаҫӗ анчах телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ туса панӑ, вӗсем анчах ҫамрӑксене пӗлӳпе культурӑ патне пыма анлӑ ҫул уҫса паҫӗҫ. Ҫакӑн пек ҫӗршыв тӗнчере урӑх ҫук.

Комсомолӗцсен доверённӑйсем, агитаторсем хушшинче малти вырӑнта пулмала. Вӗсен хӑйсен хастарлӑхӗпе пӗтӗм суйлавҫӑсене РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавне производствӑлӑ пысӑк ҫӗнтерӳсемпе ҫитме ҫӗклентермеле. Ҫамрӑксен хӑйсен вичкӗн сисӗмлӗхӗпе тӑшмансен пур йышши маневрисене туйса илме пӗлмеле. Комсомол организацисен ҫамрӑксен мас ине тӑшмансене палласа илме вӗрентмеле. Ҫакӑн пек тӑвас тесен, комсомол организацисен хӑйсен ӗҫӗсене халӗхинчен темиҫе хут ытларах вӑйлатмала. Уйрӑмах комсомол организацисем йенчен доверённӑйсене, агитаторсене кулленхи ӗҫре пулӑшса пыни кирлӗ. Комсомол организацисен ҫакна асра тытас пулать: вӗсенчен чылайӗшӗ ҫак пысӑк ӗҫе пуҫласа хутшӑннӑ.

Комсомол организаци умӗнче тӑракан чыслӑ та хисеплӗ задач вӑл—ҫитес суйлавсене иртнӗ суйлавран та лайӑхрах, организацилӗрех иртерме пӗтӗм ҫамрӑксен массине мобилизацилесси пулать.

## Партин Ленинград облӑҫӗнчи организацин VII-мӗш конференцийӗ уҫӑлнӑ

Ийунӗн 8-мӗшӗнче Ленинград облӑҫӗнчи парторганизацин VII-ш конференцийӗ уҫӑлнӑ. Конференцине 8[illegible]0 делегат ытла пынӑ.

Конференцине Ленинград большевикӗсен руководителӗ Жданӑв йулташ уҫнӑ. Делегатсем ӑна тӑвӑллӑн алӑ ҫупса саламласа кӗтсе илнӗ.

Пит пысӑк хаваслӑхпа хисеплӗ президиума Сталин, Молотӑв, Каганович, Ворошилӑв, Калинин, Андрейӗв, Микойан, Жданӑв, Йежов, Чубарь, Хрушчов, Димитров, Тельман, Хозе Диас йулташсене суйланӑ.

Конференцин кун йӗркинче— ПСК(б)П Ленинград облӑҫ комитечӗн отчочӗ, ревизи комиҫҫин отчочӗ, обкома тата ревизи комиҫҫине суйласси.

(ТАСС).

## Партин Мускав облӑҫӗнчи организацин VI мӗш конференцийӗ

Ийунӗн 8 мӗшӗнче Мускав облӑҫӗнчи парторганизацин VI мӗш конференцийӗ уҫӑлнӑ. Конференцине ӗҫтӑвакан сасӑпа 764 делегат тата канашлакан сасӑпа 182 делегат пынӑ.

Конференцине партин Мускав комитечӗн секретарӗн ӗҫӗсене туса пыракан Угарӑв йулташ уҫнӑ.

Президиума 31 ҫын суйланӑ, вӗсен хисепӗнче: Угарӑв, Маленков, Мехлис, Булганин, Шкирйатӑв, Братановский, Хохлов, Сидарӑв, Буденный йулташсем тата ытти те.

Тӑвӑллӑн та нумайччен алӑ ҫупса конференцин хисеплӗ президиумне Сталин, Молотӑв, Каганович, Ворошилӑв, Калинин, Андрейӗв, Микойан, Йежов, Жданӑв, Чубарь, Хрушчов, Димитров, Тельман, Хозе Диас йулташсене суйланӑ.

Мандат комиҫҫине тата редакци комиҫҫине суйланӑ хыҫҫӑн кун йӗркине ҫирӗплетнӗ. Кун йӗркинче: ПСК(б)П Мускав облӑҫ комитечӗн отчочӗ; ревизи комиҫҫин отчочӗ; ПСК(б)П Мускав комитетне суйласси; ревизи комиҫҫине суйласси.

Партин Мускав облӑҫ комитечӗн ӗҫӗсем ҫинчен Угарӑв йулташ отчотлӑ доклад туса панӑ, делегатсем ӑна алӑ ҫупса кӗтсе илнӗ.

(ТАСС).

## ССР Сойузӗн орденӗсене пани

Ийунӗн 7 мӗшӗнче, ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин йулташ Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗпе Тинӗс Ҫар Флочӗ ХХ ҫул тултарнӑ май наградӑланӑ Хӗрлӗ Ҫаран командирӗсемпе политработникӗсене орденсем панӑ. Орденсем панӑ ҫӗрте Президиум членӗсенчен чылайӗшӗ пулнӑ.

Орденсем Инҫет-Хӗвелтухӑҫри Хӗрлӗ йалавлӑ Уйрӑм Ҫар командуйушчийӗ Совет Сойуз Маршалӗ Блюхер йулташ, полковник Алимӑв йулташ, майор Бурмин йулташ, капитан Бондаренко йулташ, политрук Федотӑв йулташ тата ыттисем те илнӗ.

Блюхер тата Алимӑв йулташсем сӑмах тухса каланӑ. Вӗсем Инҫет-Хӗвелтухӑҫри Хӗрлӗ йалавлӑ Уйрӑм Ҫарӑн никам хавшатайми хӑвачӗ ҫинчен тата вӑл хӑй умне лартнӑ задачӑсене кирек хӑш минутра та пурнӑҫа кӗртме хатӗр тӑни ҫинчен каланӑ.

Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫар командирӗсем хыҫҫӑн наградӑсем 1937 ҫулта Парижре пӗтӗм тӗнчери выставкӑра совет павильонне тунӑ ҫӗрте ӗҫлене работниксен ушкӑнӗ илнӗ. Вӗсем хушшинче—архитектор, пройект авторӗ Б. М. Иофан тата В. И. Мухина скульптор.

Унтан Калинин йулташ орденсем пӗтӗм союзри спорт обществисене—„Динамо" тата „Спартак" обществисене панӑ, вӗсене хӑйсен ӗҫӗнче калама ҫук чаплӑ ҫитӗнӳсем тунӑшӑн наградӑсем памала тунӑ пулнӑ. Ҫавӑн пекех орденсем физкультурӑпа спортӑн уйрӑм работникӗсемпе маҫтӑрӗсем те илнӗ.

В. П. Филатӑв профессор кӗске сӑмах тухса каланӑ, ӑна медицинӑ ӗҫӗнче калама ҫук чаплӑ ҫитӗнӳсем тунӑшӑн Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Йалавӗн орденне парса наградӑланӑ.

Йулашкинчен М. И. Калинин йулташ сӑмах каланӑ.

(ТАСС).

## Трактӑриссен канашлӑвӗ хупӑннӑ

Ийунӗн 8-мӗшӗнче ССР Сойузӗн Ҫӗр ӗҫ Халӑх Комиссариатӗнче пулнӑ машинӑ-трактӑрлӑ станцисенчи трактӑриссен канашлӑвӗ хупӑннӑ. Ҫав канашлура Сойузӑн 20 республикӗсемпе облӑҫсен представителӗсем пулнӑ. Канашлура трактӑриссене ӗҫшӗн тӳлес йӗркен положенийӗн, ӗҫ нормийӗн тата трактӑр паркӗсемпе усӑ курасси-не организацилемели положенин ҫӗнӗ пройекчӗсене сӳтсе йавнӑ.

Тухса каласакансем, тепрен илсен, пройектсемпе килӗшсе, вӗсен уйрӑм пункчӗсене вӑйлӑн критикленӗ тата хаклӑ сӗнӳсем панӑ, сӑмахран, ӗҫсене срукчен тунӑ, тырпул тухӑҫлӑхӗ йӗнепе ытлашипех тултарнӑ трактӑриссене премисем парасси ҫинчен пройекта кӗртме хушса хӑварнӑ т. ыт. те.

Канашлу трактӑриссене колхозсенчи ӗҫсемшӗн лартса панӑ ӗҫкунӗ ен хакне малашне те хӑварма кирлине кӑтартнӑ.

(ТАСС).

## Йышлӑ ҫемйел-сене 1.357 мӗлйун тенкӗ панӑ

ССР Сойузӗн правителстви абортсем тума чарасси, ача амӑшӗсене материаллӑ пулӑшу парасси, йышлӑ ҫемйелисене государствӑ йенчен пулӑшу парасси тата ыт. ҫинчен постановлени кӑларнӑранпа кӗҫех икӗ ҫул ҫитет. ССР Сойузӗн Финанс Халах Комиссариачӗн йулашки сведӗнисем тӑрӑх ҫав постановлени кӑларнӑранпа (1936 ҫулхи ийунӗн 27-мӗшӗ) 1938 ҫулхи майӑн 1-мӗшне ҫитиччен йышлӑ ҫемйелисене 1.357 мӗлйун тенкӗлӗх пулӑшу панӑ.

(ТАСС).

## Тулӑ тӑршшӗ ҫынран та ҫӳлӗ

СИМФЕРОПАЛЬ, ийунӗн 8-мӗш. (ТАСС). Крым республикӗнчи колхозлӑ хирсенчи тырӑсем ҫӳра та ҫӳле, Сейтлер районӗнчи „Красный Крым" колхозӑн кӗрхи тулли ҫынран та вӑрӑм. Пӗр тӑваткал метр ҫинче кӑҫал иртнӗ ҫулхинчен 200—300 пучах ытларах.

Халӗхи вӑхӑтра кӗрхи тулӑпа урпа сӗткене ларнӑ. Тепӗр 10—15 кунран колхозсем тырпулсене пуҫтарса кӗме тытӑнмала.

## Уй-хир ҫумкурӑксенчен таса пултӑр

Халӗ пур колхозсенче те акнӑ тырпулсене ҫум курӑкӗсенчен тасатас ӗҫ сарӑлса пырать. Вӑрнар районӗнче, Н Козлов йулташ ҫырса пӗлтернӗ тӑрӑх, Камаш, Туси Марат, Ҫавалкас Марат тата Тӳлӗкас Марат йалӗсенчи колхозсем кӗрхи тулӑпа клевер ҫинчи ҫум курӑксене пӗррӗмӗш хут ҫумласа та пӗтернӗ. Колхозниксем ҫум ҫумланӑ ҫӗрте ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Ҫав хушӑрах Нурасри „Искра" колхоз колхозникӗсем ҫум ҫумлас ӗҫре те, тырпулсене уйран пуҫтарса кӗртме хатӗрленес ӗҫре те питӗ кайа йулса пыраҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе Г. Иванов йалкор ҫапла ҫырса пӗлтерет: май уйӑхӗнче пулнӑ ҫӑмӑрсем хыҫҫӑн кӗрхипе ҫурхи тырӑсем ҫинче ҫум курӑксем йышлӑн шӑтса тухрӗҫ. Колхозра тырпулсене ҫум курӑкӗсенчен тасатас пирки питӗ сахал тӑрӑшаҫҫӗ, уйри тырпулсене пуҫтарса кӗме чухне кирлӗ машинӑсене халиччен пуҫтарса лартман. Ҫӗнӗ тырӑсене йышӑнма кӗлетсем те хатӗр мар.

## Ҫумкурӑкӗсенчен тасатаҫҫӗ

ЕЛӖК. Крымсарайкӑри „Коммунар" колхоз ҫурхи тырӑсемпе кӗрхи тулӑ калчисене ҫум курӑкӗнчен тасатма тытӑнчӗ.

Ҫум ҫумлас ӗҫре 11 бригадӑ хастарлӑ ӗҫлет. Уйра ҫум ҫумлакансем кашни кунах хаҫат вуласа ҫӗнӗ хыпарсене пӗлсе пыраҫҫӗ. Уйрах РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйламали Положенисене вӗрентеҫҫӗ, РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене депутата суйлама регистрациленӗ кандидатсем ҫинчен каласа параҫҫӗ.

Ҫум ҫумлас ӗҫре ударниксем те сахал мар палӑраҫҫӗ. Акӑ, 60 ҫулхи колхозницӑсем—Иванова Матренапа Димитрийӗва Марийа хӑйсен ӗҫ нормисене йаланах планран икӗ хут ирттерсе тултарса пыраҫҫӗ. Вӗсем пахалӑхшӑн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

Арк. Нестерӗв.

## ЙУТ ҪӖРШЫВСЕНЧЕ

### Испанири фронтсенче

Хӗвелтухӑҫ (Каталони) фронтӗнче пӑлхавҫӑсем Кольйадо дел Санто текен сӑрт-тула районта республиканецсен позицисем ҫине темиҫе хутчен те атакӑлама хӑтланнӑ. Анчах фашиссен атакисене хытӑнах сирсе пӑрахнӑ. Пӑлхавҫӑсен 70 ҫын вилнӗ.

Леванта патӗнчи фронтра пӑлхавҫӑсем, авиаципе танксем пулӑшнипе, Теруелтен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫ йенче республиканецсен позицисене туртса илме икӗ хутчен хӑтланнӑ, анчах республиканецсем вӗсене кайала хӑваласа йанӑ.

Ытти фронтсенче — улшӑнусем ҫук.

* * *

Ийунӗн 6 мӗшӗнче ҫӗрле фашиссен самолечӗсем Барселонӑ ҫине икӗ хутчен пырса бомбӑ ем пӑрахнӑ. Бомбӑсем пӑрахнипе Голланди пӑрахутне сиенлене, вӑл портра тӑнӑ пулнӑ. Бомбӑсенчен хулара 7 ҫын вилнӗ тата 6 ҫын аманнӑ.

Фашиссен самолечӗсем Валенципе Таррагонӑ ҫине те тапӑнма хӑтланнӑ. Республикӑн зенитлӑ батарейӗсем вӗсене кайала хӑваласа йанӑ.

(ТАСС).

### Аликанте ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ

Ийунӗн 7-мӗшӗнче фашиссен чылай самолечӗсем Аликанте (Испанин Вӑтаҫӗрти тинӗс хӗрринчи порчӗ) ҫине хӗрӗхе йахӑн бомбӑ пӑрахнӑ. 100 ҫын аманнӑ, пер ҫын вилнӗ.

Бомбӑсене халӑх нумай пуранакан кварталсем ҫине пӑрахнӑ. Пер бомби Бельги консульстви ҫине ӳкнӗ.

(ТАСС).

### Йапони работницисен йӑвӑр пурнӑҫӗ

Йапонире промышленнӑҫра ӗҫлекен хӗрарӑмсен хисепе хыттӑн ӳсни палӑрать. Халӗхи вӑхӑтра Токио хулинчи хапрӑксенче, сават сенче тата вак маҫтерскойсенче 150 пин работницӑ ӗҫлет, вӗсен ӗҫ укҫи пигех те пӗчӗк, уйахра 15 иенрен пуҫласа 40 иена ҫити кӑна илеҫҫӗ (1 иене— 1 тенке те 53 пус шутланать).

Работницӑсен ӗҫ укҫи чакса пырать, ҫав хушӑрах вӗсен ӗҫкунӗ вӑрӑмланса пырать.

(ТАСС).

### Польшӑ пригӑварӗ

Польшӑн Вильно хулинчи округ суче тавата ҫынна коммунисла ӗҫсемшӗн айӑпласа тунӑ процесс петнӗ. Суг икӗ ҫынна ҫакса вӗлермеле, икӗ ҫынна ӗмӗрлӗхех термере хупса усрамала тунӑ.

(ТАСС).

### Китайри фонтсенче

#### Ийунӗн 4-мӗшпе 9-мӗш хушшинчи вӑрҫӑ ӗҫӗсене пӑхса тухни

Йулашки кунсенче Ҫурҫӗр Китайра Йапони командованийӗ вӑрҫӑн тӗп ӗҫӗсене Лунхайск чукунҫул участкине куҫарнӑ. Вӗсем хӑйсен тӗп вӑйӗсемпе Хенань провинцин столици ҫине — Кайфын хули ҫине тапӑнма пӑлӑртнӑ. Кайфын хули стратеги йенчен пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Фронтӑн ҫав участкине Йапони командованийӗ пысӑк ҫарсем илсе пынӑ, вӑл ҫарӗнӗ механизациленӗ чаҫсем пулӑшса пынӑ. Вӗсем хула ҫине виҫӗ йенчен наступлени тунӑ.

Китай ҫарӗсем кунта Йапони ҫарӗсене хи ӗҫ тытӑклӑн тӑнӑ, Китай ҫарӗсем темиҫе хутчен те контрнаступлени тунӑ. Ӗҫе татса параканни кунта йапонӗцсем ҫар техники тӗлӗшӗнчен китайӗцсенчен маларах тӑни кана пулнӑ. Кунсӑр пуҫне, Йапони ҫарӗсем вӗлерекен газсемпе те усӑ курнӑ.

Йапонин механизациленӗ чаҫӗсем пысӑк активлӑхпа вӑрҫнӑ, вӗсем шоҫҫе ҫуле тӑрӑх, Лунхайск чукунҫулӗнчен кӑнтӑртарахран наступлени туса пынӑ. Ийунӗн 4-мӗшӗнче вӗсем Кайфын патне 26 километр ҫывӑха ҫитсе, Китай ҫарӗсен пӗр ушкӑнӗн флангне татса кӗнӗ. Китай ҫарӗсем Ланфын станцине, Кайфынрен 40 километр хӗвелтухӑҫнеле, хӳтӗлесе тӑнӑ. Ийунӗн 4-мӗшӗнче ҫӗрле Китай ҫарӗсен ирӗксер-х ҫав районтан тухса кайса, хевелана не е куҫма тивнӗ. Ийунӗн 5-мӗшӗнче Йапони ҫарӗсем Кайфын патне ҫитсе тӑнӑ.

Ийунӗн 6-мӗшӗнче, хыттӑн вӑрҫнӑ хыҫҫӑн, Китай ҫарӗсем хуларан тухса кайса, Чжунмоу станцинчен хевелтухӑҫнерех ҫӗнӗ позицисем йышӑннӑ.

Лунхайск чукунҫулӗнчен кӑнтӑр йенче, Аньхуей провинцинче, Йапони ҫарӗсен фронт линине тӳрлетме тата хевелтухӑҫнеле, Бейпин—Ханькоу чукунҫулӗ, Китайӑн питех те кирлӗ стратегилле линийӗ патнелле, пӗтӗмӗшле наступлени тума хӑтланнӑ. Анчах, чукунҫултан инҫетре вӑрҫ ипе та а китайӗцсем вӗсене хирӗҫ калама ҫук хыттӑн тӑнӑ пирки, Йапони ҫарӗсем паламала ҫитӗнӳсемех тӑвайман. Йулашки вахатра Йапони ҫарӗсен фронт линийӗ вӑрӑма та ӑ[illegible]са кайнӑ, ҫавна пула вӗсем чукунҫулӗнчен уйӑрӑлса кайнӑ. Йапонецсен тылӗнче тата флангенче Китай чаҫӗсемпе партизансен отрйачӗсем вӑрҫаҫҫӗ, вӗсем Йапони ҫарӗсене вӑрҫа хатӗрӗсем та а ҫимӗҫсем илсе пыма питех те йаваралатаҫҫӗ. Фронтӑн хӑшпер участкисенче Йапони ҫарӗсем вӑрҫӑ хатӗрӗсем тата ҫимӗҫсем ҫитменнипе аптраҫҫӗ.

Ҫак йаварлӑхсене шута илсе, Йапони командованийӗ Йанцзы йуханшывӗ тӑрӑх Китай ҫӗрне тапӑнас малалла кӗме хатӗрленет, ку вырӑнта ҫарпа флота пӗрлешсе вӑрҫма майсем пур. Йанцзы йуханшывӗ патӗнче, Уху хулинчен кӑнтӑр хӗвеланӑҫнелле, Йапонин ҫар карапӗсем 20 ытла тӑраҫҫӗ. Йапонецсем карапсем ҫинчен десант антарма темиҫе хутчен те хӑтланнӑ, анчах Китай ҫарӗсем вӗсене хирӗҫ хыттӑн тӑнипе, вӗсен ӗҫӗ ӑнман.

Йапони авиацийӗ сакӑр кун хушши ӗнтӗ Кӑнтӑр Китайри чи пысӑк хула ҫине—Кантон ҫине пӗр майах пырса бомбӑсем пӑрахать.

Кашни кунах икшер-виҫшер хут пырса тапӑнаҫҫӗ Йапони самолечӗсем. Йапони войеншчини шкулсене те, госпитальсене те, лапкӑ пурнӑҫпа пуранакан халӑхсене те хӗрхенмест. Бомбӑсем пуринчен ытла хулари халӑхсем йышлӑн пуранакан районсем ҫине пӑрахаҫҫӗ. Урамсем ҫине пулеметсенчен переҫҫӗ.

Хулари халӑхсем тӑруках хӑраса ӳкмеҫҫӗ. Китайӑн кӑнтӑр йенчи провинцисенче пуранакан халӑхсем Йапони захватчикӗсене хирӗҫ вӗсене мӗн ҫӗнтериччен кӗрешме хатӗрри ҫинчен кӑтартса параҫҫӗ.

(ТАСС).

## Чехословакире фашиссем провокацилӗ ӗҫе вӑйлатаҫҫӗ

Чехословакири муниципалитет суйлавӗн йулашки (виҫҫӗмӗш) турӗ умӗн, Гитлер агенчӗсем—генлейновӗцсем тата Германипе Польшӑ фашисӑмӗ пулӑшса тӑракан глинки партийӗ, (Словакири автономиссен партийӗ) ҫӗршывра провокацилӗ ӗҫе вӑйлатаҫҫӗ.

Генлейновӗцсем тата Словакин автономисӗсем Чехословакине пайласа, демократилӗ стройа пӗтерес, Чехословаки ССР Сойузӗпе тата Франципе ҫыхӑну тытнине аркатас лозунгсемпе ӳсӑнах тухаҫҫӗ.

Судет Нимӗҫ облӑҫӗн тата Словакин мӗн пур пункчӗсенче Гитлер агенчӗсем тискер террӑр сарса йанӑ. Вырӑнти влаҫсен йуханчӑклӑхӗпе усӑ курса, генлейновӗцсем Чех халӑхӗ, фашисӑма хирӗҫле нимӗҫсем, ҫарсем хушшинче ҫапӑҫусем тухса кайччӑр тесе, уҫӑ демонстрацисем тата правителствӑ чарнӑ ҫӳревсем туса иртереҫҫӗ. Хӑшпӗр вырӑнсенче генлейновӗцсем, ҫар тумӗсем улӑштарса тӑханнаскерсем, халӑхсен пурлӑхне туртса илеҫҫӗ, штрафсем ҫырса илеҫҫӗ, ҫапла вӗсем халӑх умӗнче ҫар авторитетне пӗтересшӗн.

Чылай вырӑнсенче генлейновӗцсем урама хӗҫпӑшалсемпе тухаҫҫӗ. Андельск Гора хулинче хӗҫпӑшалсен вӑрттӑн складне тупнӑ. Унта Германи образецлӗ винтовкӑсем, револьверсем, штыксем, резинӑ чукмарсем т. ыт. те пулнӑ.

Чехословакири демократилӗ партисем фашиссен провокацине хирӗҫ пӗрлӗх тӑвассишӗн кӗрешессине вӑйлатаҫҫӗ. Судет Нимӗҫ облӑҫӗнчи чылай хуласенче коммунисла партипе социалисла партисем хушшинче килӗшӳсем тунӑ. Ийунӗн 6-мӗшӗнче Остров хулинче вунӑ пин ҫынлӑ демонстраци пулнӑ, вӑл демонстраци фашисӑм террорне хирӗҫле, демократишӗн кӗрешес лозунгпа иртнӗ.

(ТАСС).

### Тырӑсем лайӑх ӳсеҫҫӗ

ҪӖРПӲ. Май уйӑхӗнче пулса иртнӗ ҫӑмӑрсем хыҫҫӑн, акнӑ тырпулсем хӑвӑрттӑн ӳсме тытӑнчӗҫ. Халӗ „Хӗрлӗ паттӑр" колхозӑн ырашӗ пуҫ кӑларчӗ. Тырӑн ҫӳллӗшӗ пӗр метр ҫурӑран та иртет. Ҫурхи тырӑсем 26—30 сантиметр ҫӳлӗш ӳснӗ.

Г. Шумилӑв.

# Коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсем

## Анисийă Çеменавнă ЧЕКМЕЊОВĂ

**Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Елкеш суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат**

Анисийă Çеменавнă Чекменьовă йулташ 1891 çулта Çĕмĕрле районĕнчи Мăн Елкеш ялĕнчи хресчен çемйинче çуралнă. Ашшĕ-амăшĕсем чухăн, йывăр условире пурăннипе Анисийă Çеменавнăн шкулта вĕренме май пулман. Çавăнпа та вăл çамрăкранах ялта пурăннă, çĕр ĕçне ĕçленĕ. Совет влаçĕ пулсан çеç вăл пуйан та културăлă пурнăçпа пурăнма пуçланă.

Чекменьовă йулташ 1931 çулта „Красноармеец" колхоза кĕрет, çак вăхăтранпах вăл колхозра йĕтĕн ĕç бригадирĕ пулса ĕçлет. Агротехникăла кăтартусене тĕрĕссĕн пурнăçласа пырса, çулсерен пысăк тухăçлă йĕтĕн туса илет. Колхозра чи активлă хĕрарăм-ударница пулса ĕçлет.

Çулсерен пысăк тухăçлă йĕтĕн туса илнине кура, ăна колхозниксем 1936 çулта Мускава пысăк тухăçлă йĕтĕн-кантăр ăстаçисен Пĕтĕм Союзри съезне ярасçĕ. Социализмла ял хуçалăхĕнчи малта пыракансен съезне пулнă чухне Чекменьова йулташа правительство „Знак почета" орденĕпе наградăлат. Чекменьовă йулташ колхозра, республикăра хисеплĕ хĕрарăм, вăл колхозниксен пуйан та културлă пурнăçĕшĕн, пысăк тухăçлă тырпулшăн, çĕршыва ял хуçалăх продукчисене ытларах туса парассишĕн пĕтĕм пĕлӳлĕхĕпе вăйне парса ĕçлет. Вăл çулран çул хăйсен ĕçне лайăх пĕлекен йĕтĕн ăстаçисем вĕрентсе ӳстерет.

Анисийă Çеменавнă Чекменьовă большевиксен партипе Совет влаçĕшĕн чĕререн тăрса ĕçлекен орденоноска. Вăл Чăваш АССР Верховнăй Советĕнче депутат пулма пур йенчен те тивĕçлĕ кандидат. Социализм строительствишĕн, социализмла çĕршыв чечекленĕвĕшĕн, Ленин—Сталин партийĕшĕн тăрăшса ĕçленишĕн тата политикăлă тĕлĕшĕнчен шанчăклă пулнине кура, Анисийă Çеменавнă Чекменьовă йулташа Çĕмĕрле районĕнчи „Труженик", Мыслецри хăма çуракан савăтри рабочисемпе служащисем, инженерла-техника работникĕсем тата „Красноармеец", „Подборная", „Хĕрлĕ Октябрь", „Ударник" колхозсенчи колхозниксем хăйсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

Чекменьовă йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Елкеш суйлав округĕнче регистрациленĕ.

## Павел Ананиевич БЕЛОРУССĂВ

**Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Синкасси суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат**

Павел Ананиевич Белоруссăв 1906 çулта Куславкка районĕнчи Султи Улмалуйри чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Павел Ананиевич хăйĕн ача чухнехи пурнăçне чĕрре ыратнипе аса илет, унăн ачалăхĕ, çамрăклăхĕ пĕр савăнăçсăр, хуйхăпа иртнĕ. Ашшĕ 1913 çулта, амăшĕ 1923 çулта вилнĕ.

1920 çулта 2-мĕш сыпăклă шкулла вĕренме кĕнĕ. Хватĕршĕн тӳлеме укçа пулманнипе кашни кун шкултан 7 çухрăмра ларакан хăйсен ялне çӳренĕ. Шкула çӳреме инçе пулнипе час-часах уроксенчен юлнă. 1921 çулта вĕренме пăрахса ачасен çуртне кайнă. Унтан 1922 çулхи нойабĕр уйăхĕнче таврăннă.

Ачасен çуртĕнчен таврăнсан вăл кĕнекесене йуратса вулакă. Кашни пушă вăхăта кĕнекесем вуласа иртернĕ. 1923 çулта комсомола кĕнĕ. Кун хыççăн Белоруссăв йулташăн çĕнĕ ĕçсем пуçланнă. Вăл общественăлă ĕçсенче активлăн хутшăнса ĕçленĕ.

1923 çултан 1925 çулччен совпартшкулра вĕреннĕ. 1930 çулта Горькинчи коммунисла университетра пропагандистсен уйрăмне кайса вĕреннĕ.

Белоруссăв йулташăн партилĕ ĕçре пысăк опыт пур. 1925—1927 çулсенче вăл Чăваш Сурăмра, Асанкассинче тата Елĕк вулăсĕнчи йалсовечĕ политграмăта шкулĕсенче пропагандист пулса ĕçленĕ.

1929 çултан 1930 çулччен ПСК(б)Парти Елĕк райкомĕнчи агитаципе пропаганда пайĕн пуçлăхĕ, унтан ПСК(б)П райком çекретарĕ пулат. Горькинчи коммунисла аслă шкултан вĕренсе тухсан, ПСК(б)Парти Чăваш Обкомĕнче културăпа пропаганда пайĕн инструкторĕ, 1933 çултан 1938 çулхи май уйăхĕччен ПСК(б) Парти Тĕп Комитечĕ çумĕнчи ИМЗО Чăваш уйрăмĕн директорĕ.

Халĕ Павел Ананиевич ПСК(б) Парти Канаш райкомĕн пĕрремĕш çекретарĕ пулса ĕçлет.

Павел Ананиевич Белоруссăв йулташа, вăл партипе правительствăа хушша пур ĕçре те тӳррĕн те тĕрĕссĕн ĕçлесе пынине кура, Канаш районĕнчи Сикасси суйлав округĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç. Белоруссăв йулташ халăх шанăçне тӳррĕн пурнăçлакан Ленин—Сталин партийĕ пăхса çитĕнтернĕ тĕрĕс большевик.

**Редакцирен.** Ийунĕн 8-мĕшĕнче тухнă „Чăваш Коммунĕ" хаçатра редакци айăпĕпе Павел Ананиевич Белоруссăв йулташ автобиографийĕ йăнăш кайнă пирки, ăна тӳрлетсе тепĕр хут пичетлетпĕр.

## Васиилий Данилăвич ДАНИЛĂВ

**Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Турай суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат**



Васили Данилăвич Данилăв 1910 çулта Тутаркас районĕнчи Çĕмĕртлĕ Чемей ялĕнче çуралнă.

Вăл 1930 çулта хăй ирĕккĕн Хĕрлĕ Çара кайнă. 1933 çулта Хĕрлĕ Çартан таврăнсан, колхозра ĕçлесе пурăнат. Колхозра пур ĕçе те тӳррĕн туса пынине кура, Данилăв йулташа 1934 çулта звеновода суйлаççĕ. Звеноводра ĕçленĕ чухне вăл колхозниксене агротехникă кăтартăвĕпе ĕçлеме вĕрентсе, малтанхи çулах хăйĕн звено участкинче халиччен пулман вăйлă тырпул туса илет.

Кун хыççăн вăл 1935 çулта Пĕтĕм Союзри колхозник-ударниксен 2-мĕш сйесĕн делегачĕ пулат.

1935 çулта вăйлă тырпул туса илес ĕçре пысăк çитĕнӳ тунăшăн Васили Данилăвич Данилăв йулташа ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ Хĕрлĕ Йалав орденĕпе наградăлат.

Данилăв йулташ 1938 çул пуçламĕшĕнчен вара „Страж революции" колхоз председателĕн заместителĕ пулса ĕçлет. Ĕçре йалананах коммуниссен партишĕн тата социализмла çĕршывшăн пĕтĕм вăйне хурса ĕçленине кăтартат.

Вăл Ленин—Сталин çырнă кĕнекесене вуласа хăйĕн политикла пĕлӳне ӳстерет.

Тутаркас районĕнчи „Страж революции" колхоз колхозникĕсем Васили Данилăвич Данилăв йулташа Ленин—Сталин парти çулĕнчен нĕр пăрăнмасăр тӳррĕн ĕçленине кура, малашне те вăл халăх шанăçне тӳррĕн пурнăçласа пырасса пĕлсе, ăна Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

Данилăв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама халĕ Турай суйлав округĕнчи суйлав комиççийĕ регистрациленĕ.

Данилăв йулташ социализмла çĕршывăн шанчăклă ывăлĕ.

## Васиилий Çеменăвич КИРИЛЛĂВ

**Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Турхан суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат**

Турхан районĕнчи „Осоавиахим", „Трактăр" тата „Октябĕр" колхозсенчи колхозниксен тата йединоличниксен суйлав умĕнхи пĕрлехи пухăвĕсенче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Васиилий Çеменăвич Кириллăв йулташ кандидатурине тăратнă.

Васиилий Çеменăвич Кириллăв йулташ 1896 çулта Турхан районĕнчи Çĕнĕ Выçĕлкă ялĕнче, чухăн хресчен çемйинче çуралнă.

1913 çулта двухкласнăй шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Оренбург облаçĕнчи Бузулук районĕнчи Богатăвăри сахăр савăтĕнче рабочире ĕçлесе пурăннă. Савăтра вăл икĕ çул хушши ĕçленĕ.

1915—1918 çулсенче Донецк облаçĕнчи Шура Калитăвкă çĕркăмрăк шахтинче забойщикре ĕçлесе пурăннă.

1919 çулта Хĕрлĕ Çара кайнă, унта вăл икĕ çул хушши пурăннă. Хĕрлĕ Çар ретĕнчен таврăннă хыççăн 1920 çултан пуçласа 1925 çулччен Çĕнĕ Выçĕлкă йалсовечĕн çекретарĕ пулса ĕçленĕ.

В. Ç. Кириллăв йулташ 1925 çулта Бугурусланти педагогикă техникумĕ çумĕнчи пĕр çул вĕренмелли педагогикă курсне вĕренме кĕнĕ. Педагогикă курсĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн Васиилий Çеменăвич педагогикă ĕçĕнче, чăваш халăхне çутта кăларас ĕçре ĕçлесе пурăнат. Халĕхи вăхăтра вăл Бокшайĕвăри пуçламĕш шкул пуçлăхĕнче ĕçлет.

Васиилий Çеменăвич примерлă учител. Бокшайĕвăри пуçламĕш шкул вĕрентӳ ĕçĕпе тата ачасене воспитани парас йенĕпе районра пĕрремĕш вырăнта тăрат.

Вăл хăй педагогикă ĕçĕнче ĕçлеме пуçланăранпа, шкулта вĕрентӳ ĕçĕпе воспитани ĕçне лайăх организациленĕшĕн, темиçе хут та премиленĕ.

Васиилий Çеменăвич общественăлă ĕçсенче те активлă ĕçлет. Вăл кашни çулах хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекеннисене вĕрентсе кăларат. Йалти ĕççыннисем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçсене туса пырат.

## Николай Николайĕвич ДРЕНЙАСĂВ

**Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Пăрачкав суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат**

Николай Николайĕвич Дренйасăв йулташ 1897 çулта Мордва АССР-чи Краснослободский районĕнчи Русская Лашма ялĕнче çуралнă. 1917 çултанпа ПСК(б) Парти членĕ, вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Патша çарĕнче тата Хĕрлĕ Çарта пулнă.

Дренйасăв йулташ революциле йухăма активлăн хутшăннă. Патша çарĕнче, кăнтăр-хĕвеланăç фронтĕнче чухне, салтаксем хушшинче „Окопская правда" хаçата сарат, вăрçа хирĕç агитацилет. Ăна фронтри большевиксен организацинчи ротăри комитетне, унтан батальонри комитетне суйлаççĕ. Вăрçа хирĕç агитациленӗшĕн ăна патша правительстви айăплама тытăнат. Патша çарĕ фронтра кайала чакнă вăхăтра, вăл хăйĕн тăван çĕршывне, Пензă кĕпĕрнине, тарат.

Граждан вăрçи вăхăтĕнче чехословаксене çĕмĕрес ĕçе хутшăнат, унтан Пензă, Саратăв, Пйатигорск кĕпĕрнисенче тата Дагестанра Антонăвсен контрреволюциле бандисене пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлекен отрйадсенче кĕрешет. Çар организацисенчен вăл Пензă кĕпĕрнинчи çар комиссарĕн помошникĕ, Урал çар округ штабĕнче оперативлă пай начальникĕ, Дагестанра уйрăм çар бригадин командирĕ, кулаксен восстанисене пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлекен Ботлихăвăри çар группин командуйушчийĕ.

Дренйасăв йулташ Хĕрлĕ Çартан кайала таврăнсан, 1923 çулта Курск, Козлов, Ленинград, Мускав, Шупашкар хулисенче рабочисемпе хресченсен милицинче йĕртсе пыракан вырăнсенче ĕçлет. Халĕ те вăл Чăваш АССР-чи Рабочисемпе Хресченсен Милицин тытăмĕн начальникĕ пулса ĕçлет.

Николай Николайĕвич Дренйасăв йулташа Пăрачкав районĕнчи Максим Горький йачĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç. Ăна Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Пăрачкав округĕнчи суйлав комиççийĕ регистрациленĕ.

## Иван Александрăвич АЛЕКСАНДРĂВ

**Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йеникасси суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат.**

Иван Александрăвич Александрăв йулташ Вăрмар МТСтанци тракторăр бригадин бригадирĕ.

И. А. Александрăв йулташ социализмла ял хуçалăхĕнчи паллă çын. Вăрмар районĕнчи „Новая Жизнь", „Вутлан" колхозсенчи колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче Иван Александрăвич Александрăв йулташа Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртрĕç.

И. А. Александрăв ПСК(б)П членĕн кандидачĕ. Вăрмар районĕнчи Киве Вăрмар ялĕнче 1908 çулта çуралнă. Ашшĕ вăтам хресчен пулнă. Тăванĕсем 1936 çултанпа колхоз членĕнче тăраççĕ. Александрăв йулташ 1922 çулта ялти шкултан вĕренсе тухнă, вара 1927 çулччен хăйĕн хуçалăхĕнче ĕçлесе пурăннă.

1927 çултан пуçласа 1931 çулччен Мурманск чукун çулĕ çинче чернорабочире ĕçленĕ, 1931 çулта çак ĕçрен киле таврăнса, колхоза кĕрсе унта ĕçлесе пурăнат, 1932 çулта тракторăриссен курсне вĕренме кĕнĕ, çак курсран вĕренсе тухнă хыççăн, 1937 çулхи нойабĕр уйăхĕччен пĕр таталмасăр Вăрмар МТСтанцинче тракторăрис пулса ĕçлет.

И. А. Александрăв йулташ хăйĕн ĕçне йаланах тĕплĕн тăват, МТС-ра примерлă тракторăрис, Вăрмар МТСтанцинчи тракторăриссем унтан стахановла ĕçлеме вĕреннĕ. МТС дирекцийĕ ăна лайăх тĕслĕхпе ĕçлесе пынăшăн темиçе хут та премиленĕ. ССР Союзĕн Тĕпĕçтăвкомĕ ăна „Хĕрлĕ Харлĕ Йалав орденĕпе наградăланă.

И. А. Александрăв йулташ ялта тракторăриссем хушшинче общественăлă тата политикăлă пысăк ĕç туса пырат. Хăйĕн идейăлă-политикăлă пĕлĕвне ӳстерет. Вăл пирĕн Сталин тапхăрĕнче çитĕнсе ӳснĕ, Ленин—Сталин партин аслă ĕçне вĕçне çити парăнса ĕçлекен çын.

Александр Павлăвич Йерофейĕв. Ăна Улатăр районĕнчи Кирăвски хула суйлав округĕнчи суйлав комиççи ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрациленĕ.

Леонтий Давыдăвич Остряков. Ăна Патăрйелĕнчи 723-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕнчи суйлав комиççи РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрациленĕ.

## Федăр Максимăвич ВАГАНĂВ

**Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йетĕрне хула суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат**

Йетĕрнери спирт савăчĕпе çу савăтĕнчи рабочисен, работницăсен, инженерлă-техниклă работниксен пĕрлехи пухăвĕсем, çавăн пекех тата „Мартăн 8-мĕшĕ", Кирăв йачĕпе тăракан тата Буденный йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксен суйлав умĕнхи пĕрлехи пухăвĕсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Ошосдорăн 241-мĕш номĕрлĕ çулйĕр участкин начальникне, çулйĕр строительствин инженерне Федăр Максимăвич Ваганăв йулташа кандидата палăртрĕç. Ваганăв йулташ кандидатурине Йетĕрнери хула суйлав округĕнче регистрациленĕ.

Çулйĕр строительствинче парти йертсе пынипе çĕнĕ кадрсем, çĕнĕ инженерлă-техниклă работниксем ӳссе çитĕнчĕç. Федăр Максимăвич Ваганăв вĕсенчен пĕри пулат те ĕнтĕ.

Федăр Максимăвич Ваганăв йулташ 1904 çулта шывçул транспăртĕнче ĕçлекен рабочи çемйинче çуралнă. Ашшĕ Куйбышĕв облаçĕнчи Сурск районĕнчи Бар. Слобоби ялĕнчен.

Ваганăв йулташ 1923 çулта шывçул транспăртĕнче ĕçлеме кайнă, унта 1928 çулччен матрос пулса ĕçленĕ.

1928—1929 çулсенче выдвиженецсен курсĕнче вĕреннĕ. Кун хыççăн Хусан пристанĕнче таварсене йарса тăракан агент пулса ĕçленĕ, 1929 çулхи нойабĕр уйăхĕнче ăна аслă шкула вĕренме кĕме хатĕрлекен курса йана. 1930 çулта Ленинградри автомобильпе çулйĕр институтне вĕренме кĕнĕ. Институтран 1935 çулта вĕренсе тухнă.

Автомобильпе çулйĕр институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн Ваганăв йулташ 1935 çулхи мартран нойабĕре çитиччен Канаш—Шупашкар çулĕ çинчи 1-мĕш номĕрлĕ участкăра ĕçлет. 1935 çулхи нойабĕртен 1936 çулхи март уйăхне çитиччен 240-мĕш номĕрлĕ çулйĕр участкин начальникĕ. 1936 çулхи мартран август уйăхне çитиччен 1-мĕш номĕрлĕ çулйĕр участкин техноруке. 1936 çулхи август уйăхĕнчен пуçласа çак вăхăта çитиччен 241-мĕш номĕрлĕ çулйĕр участкин начальникĕ пулса ĕçлет.

Епĕр Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата хамăр тăван çĕршыва чĕререн парăнса ĕçлекен, ĕçре пиçĕ тата тĕрĕсленнĕ, социализмла çĕршыва çирĕплетсе пырассишĕн, рабочисемпе хресченсен союзне çирĕплетессишĕн, парти çулйĕршĕн ывăнма пĕлми тĕрĕс ĕçлесе пыракансене суйлатпăр. Ваганăв йулташ çакна тивĕçлĕ кандидат.

## Суйлав участкинче

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Кив Аттикасси йалсоветне кĕрекен йалсенчи пĕтĕм суйлавçăсем суйлав саккунĕсене вĕренес ĕçе хутшăннă. Халĕ йалсоветри агитатăрсенчен Грузинăвпа Захарăв йулташсем кашни кунах суйлавçăсем хушшинче чăваш халăхĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама тăратнă кандидатсем çинчен ăнлантараççĕ.

Й. Самарин.

## Харитонăвă йултăш хăйĕн суйлавçисем патĕнче

ВĂРНАР, („Чăваш Коммунĕ" корр.). Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Ураваш суйлав округĕнче регистрациленĕ Вăрнарти машинă-трактăрла станцинчи тракториска Иефросинийă Харитонăвă Çĕн Йахакассинчи суйлавçăсем патĕнче пулчĕ. Вăл килнĕ йатпа ялти колхозниксемпе ĕççынни йединоличниксен митингĕ пулса иртрĕ. Митинга 300 çын ытла пынă. Митингра Харитонăвă йулташ сăмах каларĕ, вăл хăйĕн суйлавçисене ун çине пысăк шанчăк хунăшăн тав турĕ, хăйĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ.

Петровпа Харитонăв суйлавçăсем Харитонăвă йулташ Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ пулма тивĕçли çинчен каласа, пĕтĕм суйлавçăсене ийунĕн 26-мĕшĕнче Харитонăвă йулташшăн сасăлама чĕнчĕç.

Митингра йышăннă резолюцире, Çĕн Йахакассинчи суйлавçăсем округри пур суйлавçăсене те Иефросинийă Харитонăвă йулташшăн сасăлама чĕнеççĕ.

Митрофанăв.

## Лагĕр валли

Йĕпреç районĕнчи комсомол райкомĕ лагĕр валли продуктăсем тăратас тĕлĕшпе чылай колхозсемпе договăрсем турĕ. „Çиçĕм" колхозран лагĕрте 3 пионер пулмалла. Колхоз вĕсем валли продуктăсем çителĕклĕ уйăрса хунă. Колхоз лагĕре, йама „отлично" отметкăсемпе вĕреннĕ пионерсене Çерафимă Петровă, Федосийă Беловăна тата Антонинă Федорăвăна палăртнă.

Г. Марушĕв.

## Зойа Ананийĕвнă АНДРЕЙĔВĂ

**РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Çĕрпӳ суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат**

Чăваш республикинчи чи лайăх хĕрарăмсенчен пĕрне, çирĕп большевика — Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председательне — Зойа Ананийĕвнă Андрейĕвăна Сĕнтĕрвăрри районĕнчи спирт савăтĕнчи, судоверфри рабочисемпе служащисем, инженерла-техникăла работниксем тата „Этна", „Память Ленина", „Большевик", „Пионер", „Звезда", „Кунер", „Красная Волга", Ворошилăв йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксем Çĕрпӳри 719 мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

Çавăн пекех тата Тутаркас районĕнчи Шомикри „Колос" колхозри колхозниксем Зойа Ананийĕвнă Андрейĕва йулташа Мăн Сĕнтĕрти (Тутаркас р.) 7-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

Зойа Ананийĕвнă 1899 çулта Вăрнар районĕнчи Ураваш ялĕнче ялти фельдшĕр çемйинче çуралнă. Октябĕр революцийĕ унăн пурнăç çулне анлăн уçса пачĕ. Унăн ăнланулă-ĕçлĕ пурнăçĕ совет государствин малтанхи çулĕсенче пуçланат.

Çак вăхăт тĕлнеле вăл ялти учительница пулнă. Çамрăк Зойа Ананийĕвнă Октябĕр революцин малтанхи кунĕсенчех ялти общественăлă организацисенче активлăн ĕçлесе пынă, ĕççыннисен телейлĕ, савăнăçлă, çĕнĕ пурнăçне тăвас ĕçе хастарлăн хутшăннă.

1925 çулта, хăйне Туçа вулăсĕнчи ĕçтăвакан комитет председателĕн заместительне суйланă хыççăн, Зойа Ананийĕвнă совет ĕçне куçат.

Унтанпа 13 çул хушши вăл совет тата парти органĕсенче чылай çĕрте ответлă вырăнта ĕçлет. Вăл ПСК(б) Парти Йетĕрне тата Çĕрпӳ уйес комитечĕсенче хĕрарăмсен организаторĕ пулса тата ытти ĕçсенче те ĕçлет.

Общественăлă пысăк ĕçсене туса пырса, хăйĕн идейăлă-политикăлă пĕлӳне кунран кун, çине тăрсах хăпартса пынипе, Зойа Ананийĕвнă ялти рйадовой учительницăран государствă деятелĕ пулса тăчĕ. Чăваш АССР-чи Советсен X-мĕш сйесĕ Зойа Ананийĕвнăна Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет членне суйлат, Чăваш АССР Социаллă пулăшу Халăх Комиссарĕ туса хурат. Зойа Ананийĕвнă Чăваш хĕрарăмĕсенчен пирвайхи халăх комиссарĕ.

Унтан Зойа Ананийĕвнă Рабочисемпе Хресченсен Инспекцийĕн Халăх Комиссариачĕн органĕсенче, парти коллегийĕн тата ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиççийĕн Чăваш АССР-чи уполномоченнăйĕн аппаратĕнче бюрократисăма хирĕç хайарăн кĕрешсе пычĕ, парти тата совет аппаратĕнчен халăх тăшманĕсене — чылай вăхăт ĕçлесе, совет аппаратĕнчи фашисăм агенчĕсене, троцкиссене, бухаринĕцсене тата буржуалă-националиссене тасатас тĕлĕшпе ĕçлесе пычĕ. Вăл çирĕп большевик пулса тăнине, халăх тăшманĕсемпе кĕрешме пултарнине, Ленин—Сталин парти ĕçне пĕтĕм вăй-халпа туса пынине ĕçре кăтартрĕ.

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн VIII-мĕш сессийĕ Зойа Ананийĕвнă Андрейĕвăна Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председательне çирĕплетрĕ. Чăваш республикин историйĕнче Тĕпĕçтăвкома йертсе пырас ĕçе хĕрарăма ларттни халиччен пулман.

Çакă ĕнтĕ вăл ĕçхалăх хĕрĕн ĕçĕпе кĕрешĕвне чаплăн хаклани пулат. Кӳ тĕслĕх чăваш ĕççынни хĕрарăмĕсене хавхалантарат.

Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтерӳ тунине ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйланă чухне, Андрейĕвă йулташа ССР Союз Верховнăй Совечĕн депутатне суйласа хăварчĕç.

**Редакцирен:** „Чăваш Коммунĕн" ийунĕн 8-мĕшĕнче тухнă номĕрĕнче йăнăш кайнă пирки, З. А. Андрейĕвă йулташ биографине тепĕр хут пичетлетпĕр.

## Доверённайсемпе агитатăрсем хăйсен кандидачёсем çинчен

ВĂРНАР, ийунён 8-мёш (хамăр корр., телефон тăрăх). Кÿлхёрринчи „Трактăр“, Хапăсри „Советская деревня“ тата Вăрманкасри „Самоӆӡот“ колхоз колхозникёсем хăйсен суйлав умёнхи пухăвёсенче пурте пёр кăмăллăн пулса ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Гурий Михайлович Гуçёв йулташа палăртрёç. Вăл Вăрнар МТСтанци директăрё пулса 5 çул хушши ёçленё. Халё Вăрнар райёçтăвкомён председателёнче ёçлет.

Хапăс суйлав округёнче Гурий Михайлăвич кандидатури çинчен агитацилесси вăйлăн саралса пырат. Доверённăйсемпе агитатăрсем кандидатсен пурнăçёпе ёçёсем çинчен каласа параççё, вёсемшён агитацилеççё. Лайăх ёçлекен доверённăйсенчен пёрне Кÿлхёрри участкинчи доверённăйа Григорий Йугин колхознике уйрăмăнах палăртмала. Йугин йулташ вăтам çула çитнё рйадовой колхозник. Колхоз ёçёнче пиçнёскер, Гуçёв йулташ МТС директăрёнче ёçленё вăхăтра, вăл „Самоӆӡот“ колхозри уйёç бригадин бригадирё пулса ёçленё. Çавăнпа та Гурий Михайлович увшăн питех те çывăх пулнă. Хăйсен колхозёнчен тăратнă кандидат çинчеӈ Йугин çапла калат:

— Гурий Михайлович Гуçёв йулташа пирён колхозра пурте лайăх пёлеççё. Вăл МТС директăрё пулса ёçлесе, пирён районри колхозсене боӆшевикла ёçлекен тăвас, колхозсенче пуйан та куӆтурăлă пурнăç туса парас тёлёшре пысăк ёçсем тунине пирён колхозниксем нихăçан та манас çук. Йала пырсан йаланах халăхпа пёрле, ёçри çитменлёхсене вăхăтра палăртса пётерме пулăшат, паха ёççене вырăна хурса тивёçлипе хаклама пёлет. Гуçёв йулташ Вăрнар МТСтанцине республикăра малти рете кăларчё. Пирён колхозниксем Гуçёв йулташ кандидатурине пурте хавасланса тăратса, уншăн сасăлама пулчёç.

Йугин йулташ йаланах колхозниксемпе пёрле пулса, колхозниксене Гуçёв йулташăн ёçёсемпе пурнăçё çинчен каласа ăнлантарат, ăна ку ёçре агитатăрсем пулăшаççё. Участкăра 27 агитатăр ёçлет. Ку та вăтă суйлавçăсене уйрăмăн пухса калаçаççё, вёсене суйлав техники çинчен тата кандидат пурнăçё çинчен каласа ăнлантараççё.

Колхозниксем хăйсен калаçăвёсенче Гуçёв йулташ колхозсене ваӆӆи кадрсем вёрентсе хатёрлес тёлёшпе тунă пысăк ёççене палăртаççё. „Самоӆӡот“ колхоз членё Григорий Михайлăв çапла калат:

— Пирён колхоза çак йулашки çулсенче Вăрнар МТСтанцийё 13 трактористпа 2 комбайнёр, 5 шофёр хатёрлесе пачё. Çав трактористсенчен хăшпёрисем халё Хёрле Çар ретёнче. Колхозра трактористпулнă Скворцов халё Хёрле Çарта танкис, Николайёв—бронемашинă командирё. Çак паха ёçре Гуçёв йулташ пысăк мухтава тивёç.

Ийунён 7-мёшёнче Хапăсри çамрăк суйлавçăсен пухăвё пулса иртрё. Çамрăксем коммуниссемпе партире тăманнисен блокён телейлё пурнăçшăн, телейлё çамрăклăхшăн ёçлесе пыракан кандидачёсемшён сасăлама пулчёç.

М. М.

## Суйлав кунё ваӆӆи çёнё йурăсем вёренççё

Икё йал йунашар. Пёри—Мăн Маклашки, тепри Пёчёк Маклашки. Иккёшё те вăрман хёрринче инçетренех курăнса лараççё. Урамёсенче, пахчасенче те туллийех йăвăç ÿсет. Йал çине пăхсан йем-йешёл курăнат.

Йала кёрсен, йăвăçпа витённё хапхасем çинче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечёсене суйлама чёнекен плакатсем, лозунгсем çакăнса тăнине куратăн. Вёсем кашни суйлакана ийунён 26-мёшёнче суйлав кунё пуласс(и)не асăрхаттараççё.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечёсене суйламали Положенисене вёренме кашни йалтах кружоксем организациленё. Кружоксене учителсем йертсе пыраççё. Кашни ернере пёрре заӆӆати пулса иртет. Çавăнпа та колхозниксем суйлав саккунне лайăх ăнланаççё. Мăн Маклашкинчи учителница Марийă Иванăвна вăтă карчăксене пуçтарса суйлав Положенине вёрентет. Учител Леонтйёв йулташ çул йусанă çёре кайса калаçусем ирттерет. Ытти учителсем те тăрăшса ёçлеççё.

Икё йалёнче те хор кружокёсем пур. Вёсем суйлав кунё ваӆӆи çёнё йурăсем вёренеççё. Пёчёк-Маклашкинчи хор кружокён членёсем Мускава йалхуçалăх выставкине кайма хатёрленеççё.

— Хамăрăн пултарулăха кăтартма Пёчёк Маклашкинран пысăк Мускава çитме хатёрленетпёр, — тесе савăнат хора йертсе пыракан Тогайёв йулташ.

Суйлав кунне çапла хатёрленеççё çак йунашар йалсем. Суйлав ирттермели çуртсене хатёрлесе çитерне.

Данилăв—Чалдун.

## Суйлава тёплён хатёрленеççё

ЕЛЁК. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечёсен суйлавё тёлне Хирлепуçёнчи 802 суйлавçăран 741 суйлавçăна суйлав çинчен тёплён каласа ăнлантарнă.

Павлушка тата Шăлан йалёсенчи суйлавçăсем суйлав Положенийёсем çинчен пурте лайăх пёлсе тăраççё. Халё суйлав участкинче депутата суйлама регистрациленё кандидатсем çинчен суйлавçăсене ăнлантарса параççё. Çавнашкалах суйлав техникине вёренесси анлăн саралса пырат. Çак ёçре агитатăр Алексейёв йулташ тăрăшса ёçлет. Вăл Пурăнкасси колхозёнчи колхозниксене ёçленё çёре кайса, суйлав çинчен ăнлантарса парат.

*Н. И. Шелепи*

## Суйлав йурри

Ёç хёвелё Иосиф Сталин,
Ёççынни çывăх тусё, савăн!
Çёршыв чечеклёнчё ку чух,
Телейлё те чаплă сан ёçÿ.
Çавăнпа та сана йуратса
Верховнăй Совета суйлатпăр,
Сан йатпа чёререн савăнса
Хавасла йурăсем йурлатпăр.

Пётём тёнчери ёç халăхён
Мухтавла та паттăр çулпуçё,
Пусмăрти мён пур халăхсене
Хёнхуртан хăтарат сан ёçÿ.
Акă, мёншён хаӆ малтан сана
Верховнăй Совета суйлатпăр,
Сан ырлăхупа ăмăртланса
Çёнтерÿ йуррисем йурлатпăр.

Верховнăй Совет депутатне
Орденлă Чăваш республёкен
Мён пур халăхё сана суйлат.
Ырă сунса хёрÿ саламлат.
Йаланах сана хисеп туса,
Мухтавлă ёçÿшён савăнса,
Чăваш халăх ывăл-хёрёсем
Шăратаççё чаплă йурăсем.

Сывă пул, аслă вёрентекен,
Чанлăхăн чăн чаплă хавачё,
Санри аслăлăх ёçхалăхне
Чи илемлё пурнăç пачё.
Çавăнпа сана çывăх туйса
Мухтав йуррисем халалатпăр.
Çёршывпех сана, аслă Сталина,
Верховнăй Совета суйлатпăр.

## Вырăс-Сурăм суйлав участкинче

ЕЛЁК, ийунён 8-мёш (телефон тăрăх). Вырăс-Сурăм суйлав участки Вутлан округёнчи лайăх ёçлекен участкăсенчен пёри.

510 суйлавçăна пурне те суйлав саккунне вёрентнё. Халё суйлав техникине вёреннипе пёрле Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Вутлан суйлав округёнче регистрациленё Т. П. Куликов, РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Вăрнар суйлав округёнче регистрациленё Дубăв йулташсен пурнăçёпе тата ёçёпе суйлавçăсене паллаштарасси саралса пырат.

Вырăс-Сурăм суйлав участкине кёрекен „Доброволец“ колхозра (участкăна пёр колхоз кёрет) 14 агитатăр. Вёсенчен уйрăмăнах Храбров, Соколов, Охванйёв агитатăрсем, доверённăй Храбров йулташ лайăх ёçлеççё. Вёсем суйлавçăсене Верховнăй Советсене депутата суйлама тăратнă кандидатсем çинчен каласа параççё, вёсен ёçёсемпе паллаштараççё.

Агитатăрсем ёçре ÿссе пыраççё. Çак кунсенче лайăх ёçлесе пынă агитатăр Çивова йулташа Вырăс Сурăм пуштă уйрăмне телефонискăна илнё.

Ийунён 4—5-мёшёнче колхозниксем арман пёви пёвелерёç. Кунта доверённăй тухса Верховнăй Советсене суйлама тăратнă кандидатсем çинчен ăнлантарса пачё.

Колхозниксем историлё куна ийунён 26-мёшне ёçре пысăк çитенÿсем тунипе кётсе илме тăрăшаççё. Государствăна сёт, çăм тăратас плансене тултарнă, „ССР Сойузён оборонине тереклетмели займ“ укçине пухса пётернё. Суртла вăрлăх участкисем çинчи çумкурăксене çумласа пётерчёç. 160 гектар сухаласа, ирхи сёртме планне тултарнă. Государствăна ăш-какай тăратмали çулталăк планне 75 процент тултарнă. Халё колхозра çёнё канцеӆари тăваççё. Канцеӆарине ийунён 26-мёшне туса пётерме пулаççё.

Суйлав кампани вăхăтёнче колхозниксем ытларах кёнекесем, хаçат-журналсем вулама тытăнчёç. Малтанхи вăхăтра Вырăс-Сурăм йалне 100 екземпӆар хаçат-журнал килсе тăнă, халё 170 екземпӆар килет.

В. Йефремăв.

Хыркасси урамё (Ишлей р.)

Мохăв фотоӳкерчёкё.

## Комсомолёцсем— активлă агитатăрсем

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечёсене суйлав кампанинче Çёрпÿ районёнчи комсомолёцсем активлă хутшăнса ёçлеççё. Округсемпе участкăри суйлав комиççисенче 87 комсомолёц ёçлет. Сăмахран, комсомолёц С. П. Орешкин, ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Туçа округёнчи комиççи председателё, Румйанцёв — Уйкас суйлав округёнчи комиççи председателё пулса ёçлеççё. Суйлавçăсене РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечёсене суйламали Положенисене вёрентес ёçре 158 комсомолёц агитатăр, 247 комсомолёц вулавçăсемпе калаçу ирттерекенсем пулса ёçлеççё. Хаӆхи вăхăтра вёсем Верховнăй Советсене суйлама палăртнă кандидатсен пурнăçёсемпе ёçёсем çинчен ăнлантарса параççё. „Машиностройт“ колхозри комсомолёц Афанасйёв РСФСР Верховнăй Советне суйлама палăртнă кандидат З. А. Андрейёва, ЧАССР Верховнăй Советне суйлама палăртнă кандидат Т. В. Васийлёв йулташсем çинчен аван каласа ăнлантарат. Суйлав кампанийё ПСÇЛКС ретёнче тăман çамрăксен активлăхне хăпартат. Кăçалхи çул çёнёрен комсомол членне 420 çамрăка илнё. Комсомол речёсене ÿстерес ёçре педагогикă училишчинчи, йалхуçалăх техникумёнчи, „Хёрлё Октябёр“, „Шурăмпуç“ колхозсенчи организацисем лайăх ёçлеççё. Суйлав кампанинче активлă ёçленё 24 комсомолёца парти ретне илнё.

Г. Шумилăв.

## Çамрăк хёр суйлавçăсен пухăвё

ВĂРНАР, ийунён 7-мёшё (телефон тăрăх). Пайан РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечёсен суйлав кампанине хутшăнса ёçлес ыйтупа çамрăк хёрачасен пухăвё пулса иртрё. Хёрачасем хăйсен сăмахёсенче суйлава пысăк çеклеӈупе хатёрленни çинчен каларёç.

Тăвайёленчен килнё хёрача Илларионăвă йулташ агитаци ёçё мёнле пыни çинчеӈ каласа пачё. Вёсен йалёнче агитатăрсем бригадăсене кайса суйлав саккунё çинчен, ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Уравăш суйлав округё тăрăх тăратнă кандидат Харитонăвă йулташ çинчен каласа панă. Колхозниксем клуба пухăнса радио тăрăх паракан хыпарсене итлеççё. Ăнланман ыйтусене ыйтса пёлеççё.

Унтан Сталин йачёпе тăракан колхозран Гаврилăвă йулташ сăмах тухса каларё. Вăл ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă Харитонăвă йулташăн кунçулё çинчен каласа пачё.

— Харитонăвă йулташ, — тет вăл, — пёчёкрен тăлăха йулнă, нуша курса ÿснё, хаӆ вăл районра паллă трактăриска-стахановка.

Хёрачасен пухăвё коммуниссен тата партире тăманнисен блок кандидачёсемшён сасăлама пулса, районри çамрăксене вёсемшён сасăлама чёнсе районри мён пур çамрăксем патне чёнÿлё çыру йачё.

Митрофанăв.

## Участкăри суйлав комиççисем начар ёçлеççё

ВĂРНАР, ийунён 7-мёш (телефон тăрăх). Пăртас йалсоветне 4 суйлав участки кёрет. Анчах та вёсенчен пёри те ёçе кирлё пек йёркелесе çитермен. Шалти Пăртас участкинчи суйлав комиççине халă çуттёнче вырнаçтарма палăртнă. Участкăри суйлав комиççи председателё Илйин ответсăрлăхне пула, участка çуртне йёркелес тёлёшпе нимён те туман.

Тулти Пăртасри участкăра суйлав комиççин (комиççи председателё Скворцов) дежурнăй çук. Ийунён 7-мёшёнче комиççи çурчё кунёпех çăрапа питёрёнсе тăнă.

Ку участкăсенче агитаци ёçне начар йёркеленё. Йалсовет членёсем те суйлав кунё çинчен тёплён пёлмеççё. Уйрăмăнах йединоличниксем хушшинче нимён те ёçлемеççё. Йалти актив суйлав кампанийн ыйтăвёпе начар ёçлет. Стена хаçачёсем тухмаççё. Пăртасри участкăсем Хапăс суйлав округёнче чи кайа йулса пыракан участкăсем пулса тăраççё. Кунти коммуниссемпе комсомолецсем суйлава тивёçлипе ирттерес тёлёшпе питех те сÿрёккён ёçлеççё. Хăйсем çине хунă ответлăха тивёçлипе туйса илмеççё.

Митрофанăв.

ЕЛЁК. Районра ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тёлёшпе ёçлекен округсем 4. Çак округсенче ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама парти ёçне чёререн паранна кандидатсене регистрациленё. Хаӆхи вăхăтра участкăсенче суйлавçăсене регистрациленё кандидатсем çинчен ăнлантарса параççё. Кандидатсемшён агитацилесси саралсах пырат.

Суйлавçăсен спискисене кăларса çакнă, халё кашни суйлавçă вёсене тёрёслет. Анчах та Изванка йалсовечё суйлавçăсен спискине йалан питёрёнсе тăракан пÿлёме çакнă. Йалсовет секретарё хăй тухса кайнă чух, пÿлёме питёрсе тухат. Йалсоветёнче дежурнăй çук. Çаван пекех, Матăк йалсоветёнче те дежурнăйсем çук. Участкăри суйлав комиççи членёсем дежурствăна йёркелемен. Чылай суйлав участкисенче справка сётелёсем туна, анчах унта тёрлё ыйтупа пырсан ответлекен çук.

Чылай йалсенче радиосем ёçлемеççё. Районри куӆтмагазинра радио батарейёсем çителёклё, çавсене туйанса усă курмаççё. Устăри колхоз радиоузелё ёçлемест. Ăна ёçе йама колхоз правленийё йалсовечё пулăшмаççё.

В. Йефремăв.

## Пионерсемпе шкул ачисем хушшинчи воспитани ёçне лайăхлатмала

Коммуниссен партин Тёп Комитечё, халăхсен аслă çулпуçё Сталин йулташ ачасене коммунисла вёрентсе çитентерес ёç çине уйрăмах пысăк тимлёхпе пăхаççё. Çак политикăлă ответлă та мухтавлă ёçе туса пыма пирён парти комсомол аллине шанса панă. Комсомол хăйне шанса панине тÿрре кăларассишён пётём вăйпа çекленсе ёçлемеле. Анчах партипе комсомолăн вырăнти организацийёсем пионер организацийёсемпе пачах та çителёксёр йертсе пыраççё. Комсомол райкомёсен çекретарёсем хăйсем пионер ёçёнчен айакра тăраççё. Йелчёк, Ишлей, Çёрпÿ, Йепреç комсомол райкомёсем вожатăйсемпе уйрăмах начар ёçлеççё.

Комсомол организацийёсем йапăх йертсе пыни ачасем хушшинчи пётём воспитани ёçне начар йенчен туйтарса тăрат. Пионерсемпе, ачасемпе ёçлеме вожатăйсене чи лайăх, чи шанчăклă, пысăк пёлÿлё, политикăлă анлă тавракурăмлă комсомолёцсенчен уйăрса çирёплетмеле.

Пирён ачасене тăван çёршыва, коммуниссен партине хёрÿлён йуратма, тăшмансене хирёç хайаррăн кёрешме вёрентмеле. Ачасем хушшинче ёçленё чух кашни уйрăм калаçăва, кашни уйрăм предметпа уйрăм урока çак тёп ыйтупа çыхăнтармала. Акă мёншён ёнтё комсомол работникёсем пионер работникёсен кадрёсене суйласа илсе, вёсене вёрентес, кулленхи ёçре тёрёслесе, йулăшса пырас ёç çине уйрăмах тимлён пăхмала. Анчах нумай шкулсенче пайанхи куна çитсе те пионер вожатăйёсем çук, пионер организацисем час-часах хăйсем тёллён, тăлăххăн тенё пек, пурăнаççё.

Пирён шкулсенчи пионер организацисем вёренÿ пахалăхёшён кёрешес ёçе организацилекенсем пулса тăман-ха.

Комсомолăн 10-мёш сйесён йышăнăвёнче: „комсомолёцсемпе пионерсем лайăх вёренес тёлёшрен хăйсем çеç мар кăтартулă пулмала, вёсем тата отличнă вёренессишён социалисăмла ăмăрту организацилекенсем пулса тăмала“, тесе каланă. Ку питех те пысăк задачă. Çак задачăна пурнăçлас ёçре пионерсем пётём совёт ачисен чăнчăн пуçарса пыраканёсем пулмала.

Вёрентÿпе воспитани ёçне начар йёркеленё шкулсем республикăра чылайах тупма пулат. Акă, Шупашкар районёнчи Çёнйал шкулё, кунта вёренÿ пахалăхёшён çине тăрса тимлён ёçлени çук, клас тулашёнчи ёç те йапăх, кружоксем ёçлемеççё. Шкул çумёнче комсомол организаци пур, анчах вăл пионерсемпе шкул ачисене воспитани парас тёлёшпе нимён те тумаст. 225 пионертан пёри те галстук çыхса çÿремест. Шкулта социалисăмлă ăмăрту организацилемен, отрйадсен пухăвёсем йёркелён пулса пымаççё.

Йалчёк районёнчи Çёнё Пăва шкулёнче пионерсен пÿлёмё пур, анчах ăна, вутă çук пирки, хёл каçиччен пёре те уçман. Каламалла: пионерсен пÿлёмён ёçне кирлё пек тёрёс йёркелесен, вăл питех те пысăк усă кÿме пултарат.

Воспитани ёçёнче учителён вырăнё уйрăмах ответлă. Анчах та хăшпёр учителсем ку йенёпе ёçлемеççё.

Варăмçут шкулёнчи (Çёрпÿ р.) Антонăвă учителница воспитани ёçне йёркелес вырăнне, ачасем çинчен, вёсем пачах тÿрленме пултараймаççё тесе, жалăбасем парат. Кунашкал жалăбă вăл совет ачисем çине елеклени пулат. Кунта вёрентекен хăй начар ёçленишён ачасене айăплама пăхат.

Пётём воспитани ёçне тёпрен лайăхлатас тесен, ачасен пуçарулăхне çÿлтен-çÿлерех çеклесе пымала, пионер отрйачёсенче, звеносенче социалисăмла ăмăрту организацилемеле. Шупашкарти 13-ш номёрлё шкулта пётёмпе 12 отрйад, вёсем пурте пёр-пёринпе ăмăртса ёçлеççё, звеносем те ăмăртаççё. Ăмăрту мёнле пынине куллен шута илсе тăраççё, кăна ваӆӆи кунта уйрăм хăма пур, çав хăма çине догăвăрсем мёнле пурнăçланнине паллă туса пыраççё.

Пирён Чăваш республикёнче пионерсен йышё пачах çителёксёр ÿсет. Шкулта вёренекенсенчен пионер çулёнчисем пётём республикёпе 112.347 ача шутланат пулсан, вёсенчен пионер организацинче пётёмпе те 84.772 ача çеç тăрат. Ку тёслёх ёнтё пионер организаци хăй тёллён ÿсессе шанса тăни çинчен калат.

Сăлтавё — комсомол комитечёсем, вёсен пионер пайёсем тата партин вырăнти организацийёсем çак ёçе тивёçлипе йертсе пыманни пулат.

Çавнашкалах пионертан комсомола куçарас ёçе те начар организациленё. 84.772 пионертан комсомола пётёмпе те 1.246 çын кăна куçарнă. Пирён пионер отрйачёсенче Ленинла комсомол ретне тăма пур йенчен те хатёрленсе çитнё пионерсем питех те нумай, вёсене комсомола куçармала, малала ÿсме пулăшмала.

Комсомол пионерсенчен тăван çёршыва чёререн паранна, ăна кашни самантра паттăрăн та хăйулăн хÿтёлесе тăма пултаракан паттăрсем пăхса çитёнтермеле. Ачасем хушшинче çарпа политикă ёçне вёренессине лайăх йёркелемеле. Вёсене граждăн вăрçи çинчен, Ленин, Сталин, Ворошилăв çинчен, Хёрлё Çарпа Хёрле флот çинчен каласа памала.

Анчах çакнашкал калаçусем, лайăх каласа пама пултаракан çынсем сахал пирки, час-часах сÿреккён ирттеççё.

Калаçусемсёр пуçне, кинопа лайăххрах усă курмала. Калас пулат, ачасене кино кăтартас ёçе, уйрăмах йалсенче, начар йёркеленё. Район центрёсенче те ача-пăча сеансёсем пулмаççё, хăшпёр çёрте çак йенёпе мён те пулин туса пăхнă пулсан та, ку ёçе учителсемпе комсомол организацисем хутшăнман.

Пирён лайăх кино-картинăсем питех те нумай, сăмахран: „Чапаев“, „Аэроград“, „Летчики“, „Подруги“, „Ленин в Октябре“ тата ыт. те. Çак картинăсене ачасене кăтартсан, вёсем ачасен тавракурăмне ăнлалатас, çар ёçне вёренессипе политикăла пёлÿлёхе хăпартас тёлёшрен пысăк усă кÿмеле.

Ачасем çар ёçне питё йуратаççё, анчах ку йенёпе ёçе йёркеленсем çук, пётём инкекё те çавă ёнтё. Шупашкарти 3-мёш номёрлё шкулта вёренекен 643 ачаран „ЮВС“ значокё 4 ачан, „ГТО“ 3 ачан, „ПВХО“—187 ачан çеç пур. Йалти шкулсенче тата начартарах тёслёхсем курма пулат. Кусем ёнтё пётёмпех пирён шкулсенче çар ёçёпе физкуӆтурăна вёренесси çине сийелтен пăхни çинчен калаççё.

Нумай çёрте шкулти комсомолпа пионер организацийёсен ёçё ытахаӆтен ирттерекен вёçёмсёр пухусем, калаçусем çинче тытăнса тăрат. Шкулти комсомол организатăрё хăйён тивёçлё вырăнне йышăнман-ха.

Комсорг хăйён ёçёпе шкулта педагогăн авторитетне çирёплетсе пымала, педагогпа пёрле ёçлемеле, нумай çул хушши ёçленё учителён ёç опычёпе усă курмала, çамрăк учителе ёçре малала ÿсме, вёренме пулăшмала. Комсорг шкулти ачасемпе çамрăксен чăнчăн организатăрё, чи çывăх йулташё пулса тăмала.

Партипе правителствă шкул пурнăçне çирёппён йёркелес, ачасем хушшинче ăнланулă дисциплинă çирёплетсе пырас тёлёшпе татăклă кăтартусем панă. Пирён кашни ачана хăйне йёркеле те типтерлё, куӆтурлă тыткалама, учителе, хăйён йулташёсене тата хăйёнчен асслисене хисеплеме, шкул пурлăхне тимлён пăхма вёрентмеле. Кашни ача, вăл класа вăхăтра çитмелине, сăлтавсăр урокран йулмала маррине, шкула типтерлё тумланса, лайăх çăвăнса тасалса пымалине, класра тумтир, çёлёк, калуш тăхăнса лармала маррине тёплён пёлсе тăмала. Ача хăйне мёнле тыткаланине пахаласси учител аллинче пулмала.

Вёренекенсен отличнă вёренмеле пулсан, вёрентекенсен те отличнă кăна вёрентмеле. Учителе ёçре пётём халăх, пётём çёршыв пулăшат. Çавăнпа та епёр учителрен çамрăк ăрăва коммунисла вёрентсе çитёнтерес ёçре чи паха тёслёхсем кăтартасса кётетпёр.

Ачасене коммунисла вёрентсе çитёнтерессине вăл — совет ачисенчен тёнчене коммунисла ăнланакан, социалисăмла тăван çёршыва чёререн йуратакан, халăх тăшманёсене пётём хайарлăхпа курайман, тăшманăн ирсёр ёçёсене вăхăтра йёрлесе тупса тăшмана çапса аркатма пултаракан паттăр çынсем пăхса çитёнтерес пулат.

Кашни учител ачасене политикăлă воспитани парас ёçре урокра та, çаван пекех класпа шкул тулашёнче те чăн-чăн боӆшевикла активлăхпа ёçлемелё. Вёрентÿ ёçё воспитани ёçёнчен татăлса кайни шкул пурнăçёнче пачах та йурăхсăр йапала.

Хаӆхи тапхăрти политикăлă лару-тăрăва, клас кёрешёвён содержанийёпе формине ăнланса илнё, боӆшевисăмпа çирёп хёçпăшалланнă, пысăк пёлÿлё, паха асталăхлă учител çамрăк ăрăва чăннипех те боӆшевикла, парти, халăхсен аслă çулпуçё Сталин йулташ хушнă пек пăхса çитёнтерме пултарат. Пирён шкулсенче хёрÿлё совет патриочёсем, пулас çапăçусенче капиталисăма, фашисăма çёнтерме пултаракан геройсем ÿссе çитёнеççё.

Совет учителён истори умёнчи задачи пысăк, хисеплё. Учителя коммуниссен партийё, совет правителстви, пирён пётём тăван çёршыв шанса панине тÿрре кăлармала.

Судаков.

# Ĕскунĕсене вăхăтра çырса пырас пулать

Йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставĕ тăрăх, колхозниксен ĕçкунĕсене бригадирсен ернерен сайра мар ĕçкĕнекисем çине çырса пымалла. Анчах, нумай колхозсенче çакна пăхăнса ĕçлемеççĕ. Йумашйенчи (Йетĕрне р.) „Большевик" колхозри икĕ бригадăра ĕçкунĕсене ĕçкĕнекисем çине йанвар уйăхĕнчен пуçласа çырса паман. Çавна пула колхозниксемпе колхозницăсем 1938 çулта миçе ĕçкунĕ тунине пĕлеймеççĕ. Йанăм йалсоветне (Тутаркас р.) кĕрекен Кирăв йăчĕпе тăракан колхозра та иртнĕ çулхи октябĕр уйăхĕнчен вара ĕçкунĕсене çырса пымаççĕ.

Шенкрешри Молатăв йăчĕпе тăракан колхоз членĕсем кăçал миçе ĕçкунĕ тунине те пĕлмеççĕ. Мĕншĕн тесĕн бригадирсем ĕçкунĕсене колхозниксен ĕçкĕнекийĕсем çине вăхăтра çырса памаççĕ. Çаван пекех вĕсем ĕç хыççăн кашни колхозник миçе ĕçкунĕ тунине те ăнлантарса пани çук. Бригадирсен айăпне пула, колхозниксене ку вăхăтчченех ĕçкĕнекисене валеççе паман.

Кайри Тукайри (Шăхасан р.) „Майăн пĕрремĕшĕ" колхозра та çавнашкалах ĕçкунĕсене вăхăтра çырса памаççĕ.

Çакнашкал йĕркесĕрлĕхе халех пĕтермеле. Йалхуçалăх ертелĕн уставне çирĕп пăхăнса ĕçлемеле.

# Лайăх фермăсенчен пĕри

СĔНТĔРВĂРРИ. Кивтутайкассинчи „Кунер" колхоз выранти ăратсăр сыснасене туйанса сысна ферми организацилене. Фермăра 24 сысна пулнă.

Малтанхи çулсенче „ку фермă пире уса парас çук", тетчĕç хăшпĕр колхозниксем. Çаванпа та сыснасем пăхас çĕрте лайăх йĕрке пулман. Сыснасене пăхакан колхозниксем курссенче вĕренмен, часчасах вĕсем кунта ĕçлесен ĕçкунĕсем те сахал тивет тесе, сыснасене пăхмасăрах, пăрахса килĕсене кайнă. Çаван пирки 1931 çултан пуçласа 1936 çула çитиччен мĕн пурĕ 8 çын фермă пуçлăхĕ пулнă. 45 çын ытла сысна пăхакансем пулса ĕçлесе пăхнă.

Çакнашкал çитменлĕхсене кура, колхоз 1936 çулта Майорăв йулташа выльăх-чĕрлĕх ĕçне вĕренмелли 6 уйăхлăх курсра вĕрентсе кăларчĕ. Майорăв йулташ тăрăшса вĕреннипе 6 уйăх вĕренес выранне 3 уйăхрах вĕренсе, пĕтĕм программăна пĕтерсе тухрĕ. Вĕренсе тухнă хыççăн ăна фермă пуçлăхне лартнă. Вăл курсран вĕренсе тухнăранпа фермăра виççĕмĕш çул ĕçлет ĕнте. Малтанхи çулсенче фермăра выранти ăратсăр сыснасем пулнă пулсан, вĕсене вăл „белая английская" текен йăхлă аçаметиссемпе чуптарса, çултан-çул метизацилесе пычĕ. Паянхи кунă колхозăн сысна ферминĕ районта лайăх фермăсен шутĕнче тăрать. Мĕн пурĕ фермăра 6 çын ĕçлеççĕ, вĕсенчен икĕ хĕрарăм. Фермăра ĕçлекен колхозниксене уйăрса икĕ бригадă тунă, вĕсен çумне 13-шер ама сыснасем тата пĕрер аçа çирĕплетнĕ. Бригадирсем хушшинче социалисăмла ăмăрту догаварĕ тунă.

Пĕрремĕш бригадăра Иванов Йакăв, иккĕмĕшĕнче — Архипавă Ульйанă бригадирсем пулса ĕçлеççĕ. Иванов кăçалхи çул 10 амаран 100 çура илчĕ. Çаван пекех Архипава та 7 ама çурлаттарса 66 çура илчĕ, иккĕмĕш хут çăвăр илме татах икĕ ама чуптарчĕ. „Лиза" йатлă ама çурисем çуралнă кунах 1,2-шер килограм, „Дуня" йатлă аман — 13 çури 13 килограм туртрĕç. Уйăха çитнĕ çăварсен чĕр виçи 5—6 килограм шутланать.

Сыснасен шăмшакĕсене çирĕплетме тăвар, кăмрăк, кĕл, шăмă çăнăхĕ, çунтарнă извĕç т. ыт. кунне 20—25 шер грам тăранччен парса пыраççĕ. Сыснасен апат нормине Майорăв йулташ апат йединици тăрăх шутласа тăвать.

Государствăна панă план тăрăх 1937 çулта 140 сысна, вĕсенчĕн 24 ама пулмала пулсан, фермă ку шута пĕтĕмпех пурнăçларĕ. Кунсăр пуçне государствăна 44,8 центнĕр аш какай парса, обйазательствăна октябĕр уйăхĕнче пурнăçлана. Çав май колхозниксем государствăна аш какай парас тĕлĕшпе льгота илчĕç. 1937 çулта сысна ферминчен колхоз 6501 тенкĕ те 54 пуслăх тупăш илчĕ.

Кăçалхи çул государствă-планĕ тăрăх фермăра 150 сысна, вĕсенчен 26 ама пулмала. Çав плана халь пĕтĕмпех тултарнă.

Фермă государствăна 1938 çулшăн аш-какай парас плана апрел уйăхĕнчех тултарчĕ. Колхоз ферми автомашинă илме 17 центнĕр сысна ашĕ государствăна сутрĕ. Колхоз членĕсене 558 тенкĕлĕх сысна çури сутнă. Çапла ĕнтĕ фермă сысна çурисене икĕ çул хушшинче колхоз членĕсене çеç мар, кÿршĕри колхозсемпе колхозниксене те нумай туйантарнă.

Хĕллехи вăхăтра сыснасене клевĕр ути йалан çитермеле пултăр тесе, 5 гектар клевĕр акнă тата 4 гектар çине кăшман лартса хăварнă.

П. Васильйев.

# Сат ĕрчетеççĕ

МАН СĔНТĔР. Районра сат ĕрчетес ĕç вăйланса пырать. Чумейри „Страж революции" колхозăн 7,75 гектар çинче виçĕ çул кайала лартнă сат çитĕнет. Сатри улмуççисене пăхса ÿстерме йатарласа бригадă тунă (бригадир С. Попов). Колхоз кăçалхи çул çамрăк сатран пĕрремĕш хут тупăш илет.

Йанăм йалсоветне кĕрекен „Быстрый", Пушкăртри „Çĕнĕ çул" колхозсем те сат ĕрчетес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Çав хушăрах Йарославкăри „1-ая борозда" колхозра сат ĕçĕ çине тÿнтерле пăхаççĕ. Вĕсен 116 тĕп улмуççи сачĕ пур, çав сата пăхмаççĕ, тасатмаççĕ.

И. Çмирнов.

Серго Орджоникидзе йăчĕпе тăракан „Запорожсталь" металурги савăтĕнче Йевропăри чи вăйлă 3-мĕш номерлĕ çĕнĕ шăмакине ĕçе йанă.

К. Инсарăв фото ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

# Хуçалăх планне тултарасси — çирĕп саккун

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне рабочисемпе колхозниксем производствăлă пултарулăха вăйлатнипе, социалисăмла ăмăртува тата анлăн сарса йăлипе кĕтсе илеççĕ.

Канашри вакунсем йусакан савăтра майăн 1-мĕшне хăшпĕр цехсем апрел программине тултарчĕç. Май уйăхĕн программине тултарасси чакса ларчĕ.

Промышлĕннăç предприйатисем начар ĕçлени, пахалăх йенчен те кирлĕ продукци паманни — тăшмансемпе вĕсен сăтăрлă ĕçĕсен йулашкисене пĕтересси начар пынипчен килет.

Канашри вакунсем йусакан савăтах илер. Кунта тăшмансем сахал мар сийен туса хăварнă. Тăшмансене пула електричĕствă станцине ĕçе кĕртес срук икĕ хут улшăнчĕ. Иртнĕ çул çентябĕрĕн 1-мĕшне туса пĕтермеле йапала, кăçалхи августăн пĕрремĕшне çеç хатĕр пулать. Станцине тунă çĕрте те халăх тăшманĕсем хăйсен йунла аллисемпе республикăри пĕр пысăк савăт ĕçне малашне те пĕтерсе пырас тесе нумай ĕçленĕ. Трубинасем валли ĕçлекен икĕ хуран вăйĕсене çурри йăхан чакарса тунă. Çапла майпа савăт час-часах енерги çитмен пирки, чарăнса ларма пултарнă.

Вакунсем йусакан савăтри коллективăн тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерме çирĕп вăй пур. Производствăлă программăна тултарма та рабочисен, инженерла-техникла работниксен хастарлăхĕ пур. Ахалтен мар Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Назарăв йулташ йĕртсе пыракан тимрĕç цехĕ уйăхран уйăха плана тултарса пырать. Çак цехра рабочисенчен 79 проценчĕ стаханăвецсен ретĕнче шутланаççĕ. Хăшпĕр стаханăвецсем — рекордиссем çменăра нормăна 600—1000 процент тултараççĕ. Тимĕрç Дементйĕв йулташ нормă тăрăх çменăра 52 печĕк гайкă тăвас выранне 532 тăвать, пысăк гайкăсем 46 тăвас выранне 431 туса парать.

Суйлав кунĕ — июнĕн 26-мĕшĕ çывхарса килет. Канашри савăт йусакан коллектив çак куна питех те чаплăн кĕтсе илмеле. Çак савăт çине, аслă Сталин баллотировкăна тăма килĕшнĕ панă округа кĕрекен савăт çине, чăваш халăхĕ тимлесе пăхса тăрать. Рабочисен виçе пинлĕ коллективĕ хăйĕн хастарлăхне, пултарулăхне, парти тата Ленин — Сталин ĕçĕсемшĕн вирлĕн, пĕр пăркаланмасăр кĕрешме пултарнине кăтартса парĕ.

# Капитальнăй строительствă ĕçĕнчи ответлăха хăпартар

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи февралĕн 26-мĕшĕнче пройектпа çметă ĕçĕсене лайăхлатасси тата строительствă ĕçне укçа расхутласси çинчен йышăннă постановленире капитальнăй строительствăри нумай çитменлĕхсене палăртнă. Ку постановленипе пĕрлех çметăсемпе пройектсем хатĕрлемели инструкци, укçа-тенкĕ расхутлас тата подрйадлă догаврсем тăвас тĕлĕшпе правиласем çирĕплетнĕ. Правительствăн капитальнăй строительствă валли чи аван условисем туса паракан, застройщиксен ответлăхне хăпартакан йышăнăвне застройщиксемпе подрйадчиксем, çаван пекех строительствă ĕçне укçа хывакан банксен пит çирĕппĕн, нимĕн пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пымала.

Халăх тăшманĕсем — троцкиссем, бухаринĕцсем, буржуалă националиссем тата вĕсене пулăшакансем пирĕн хуçалăхăн пахă участкинче Чăваш АСС Республикĕн капитальнăй строительствичче сахал мар сăтăрла ĕçсем тунă. Çавна пула коммуналлă хуçалăх строительствин 1937 çулхи планĕ 15.442 пин тенкĕлĕх выранне 9.853 пин тенкĕлĕх, йе 64 процент кăна пурнăçланчĕ.

Районсенчи тата хуласенчи вуннă ытла ача çуратмали çуртсем тата ача йаслисем, 1937 çулта туса пĕтерме май пур çинчех, кăçалхи çула йулчĕç. Çирĕм çурт тăрăх ытла малтанхи çметăсене тепĕр хут пăхса, тухнă хыççăн пысăк çитменлĕхсем тупнă. Çавна пула строительствăн кивĕ çметине 1199,5 тенкĕлĕх, йе пĕтĕм çметă суммин 15 процентчĕ таран хăпартма лекрĕ.

Çметăсем тăвас ĕçре çаван пек çитменлĕхсем пулни, паллах, строительствă ĕçне чăрмантарасси патне илсе пынă. Мĕншĕн тесен, малтан палăртнă çметăпа строительствă ĕçĕ пурнăçланма пултараймань.

Строительствăсенчи ответлă работниксем 1937 çулта пулнă пысăк çитменлĕхсене хирĕç большевикла кĕрешсе пымарĕç, строительствăна кирлĕ материалсене çителĕклĕ хатĕрлесе параймарĕç.

1937 çулхине Шупашкарти електростанципе водопровод валли панă 392,7 пин тенкĕрен строительствă ĕçĕнче 115 пин тенкĕпе анчах усă курнă. Çаванпа та кунта строительствă калама çук начар пынă.

Кăçалхи пĕрремĕш çурçулта капитальнăй строительствă планне республикă тăрăх июль уйăхĕ тĕлне 24,3 процент çеç тултарнă: строительствă валли план тăрăх панă 4585,7 пин тенкĕрен 1113,4 пин тенкипе кăна усă курнă. Вăл хисепрен выранти бюджетран 778,5 пин тенкĕ, государствă бюджетĕнчен 334,9 пин тенкĕ панă.

Уйрăм строительствăсем тăрăх та çакăн пекех кичем картинăсем куранаççĕ. Шупашкар електростанцийĕ тăрăх строительствă ĕçне усă курас укçа — çурçуллăх планне 4,2 проц., урамсене асфальт сарас йенĕпе 27,1 проц., правительствă çуртне тăвасси тăрăх 28,4 процент кăна пурнăçланă. Шупашкарти 880 выранлă шкул çуртне кайа йулса тума тытăннă, строительствăна укçа-тенкĕ уйăрса панă çурçуллăх планне 28,4 процент çеç тултарнă.

Улатăрти 400 выранлă шкул çуртне тăвасси тăрăх плана 15,8 процент тултарни строительствă ĕçĕ йапăх пыни çинчен каласа парать. Çĕнĕрен лартакан çуртсен (Шупашкарти, Улатăрти тата Канашри ача сачĕсемпе шкулсем) валли çирĕплетнĕ пройектсемпе çметăсене пайан кунччченех хатĕрлемен. Çак тĕслĕхсем пройектсем хатĕрлекен кантур хăйĕн ĕçне палăртнă срукра туса пыманни çинчен аванах калаççĕ. Кунпа пĕрлех Çутĕç Халăх Комиссариачĕ Улатăрти шкул тăрăх çметăпа, пройект хатĕрлесе паманнине, ку ĕçре вăл малта асăннă кантур çине шанса ларнинĕ палăртса хăвармалă. Çитменнине Çутĕç Халăх Комиссариачĕх, ача йаслисемпе сачĕсен пройектисемпе çметисем РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариатĕнчен хăçан килессине пĕлмесĕр кĕтсе ларать.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă решенинче застройщиксемпе стройтрест хушшинчи догаврсене майăн 20-мĕшĕ тĕлне туса çитермели çинчен хытăнах калани, Улатăрти ача йаслисемпе Шупашкарти пединститутсăр пуçне, пурнăçа кĕмсĕрех йулать. Çаван пекех асăннă решенинче подрйадчиксемпе договрсем тăвасси çинчен калани те сăмах вĕççĕн çеç тăрса йулать. Çапла вара, стройтрестпа унăн начальникĕ Ворначов йулташ ку участкăра ответлăха туйманни уççăнах куранать.

Шупашкар хулин коммунхозĕ (Маслăв, Терентйĕв) коммуналлă банк тăтăшах асăрхаттарнине шута илмесĕр, хальхи вăхăта çитсе те 26 тата 12 хватерлĕ çуртсене тăвас çĕре укçа уйăрса парассине йĕркелемен. Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссариачĕ тăрăх (Волкав) Советсен çурчĕн строительствине укçа уйăрса парасси те çавна йеверлех тăрать. Куй пек çитменлĕхсене малала тăсса пынине нийепле те чăтма çук.

Чылай районсенче (уйрăмнах Çĕмĕрлепе Елĕк районĕсенче) ача çуратмали çуртсемпе ача йаслисем тăвасси, строительствă ĕçне йапăх организациленине пула, калама çук сÿрĕккĕн пырать. Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ малта асăннă строительствăсен ĕçне куллен тĕрĕслесе пырассине халĕ те йĕркелемен-ха.

Чăваш АССР Республикĕн выранти бюджечĕ умĕнче питĕ ответлă задачă — июлĕн пĕрремĕш тĕлне строительствăна 2.410 пин тенкĕ укçа пухса парас ĕç тăрать. Ку вăл республикăри пур финанс работникĕсене те иккĕмĕш квартăлта укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе большевикла ĕçлеме хушать. Кашни йал çыннийех, вăл хывнă укçа-тенкĕ халăх хуçалăхне хăпартма — шкул, пульница, ача çуратмали çуртсем, ача йаслисем, пурăнмали çуртсем тунă çĕре кайнине лайăх анлантăр.

Халăх комиссариачĕсемпе тĕпри учрежденисен руководителĕсен тата пур застройщиксемпе строительствăн выранти руководителĕсен çак кĕске вăхăтрах строительствăри сăтăрла ĕçсен йулашки ене пĕтерессишĕн большевикла кĕрешĕве тухма кирлĕ. Строительствă ĕçĕ мĕнле пынишĕн тата ĕç пахалăхĕшĕн инженерлă-техниклă работниксен ответлăхне хăпартмала. Çапла иккĕмĕш квартăлта прорывран тухса, Чăваш республикĕнчи коммуналлă строительствă ĕçĕнче татăклă улшăну тумала.

В. Таврин.

# Чехословаки умĕнчи фашисла хăрушлăх

Майăн 22-мĕшĕнче Чехословакире выранти тытамсен (муниципалитетсен) органĕсен суйлавĕсен пĕрремĕш турĕ пулса иртнĕ. Суйлавсен резульчачĕсем Чехословаки халăхĕ демократишĕн, мирлĕ пурăнăçшăн, хăйĕн республикĕ никама пăхăнас марришĕн тăнине йар уççăн кăтартса параççĕ. Çаванпа та ĕнтĕ вăл хăйĕн сасĕсене суйлавсенче фашисăма хирĕç кĕрешекен питĕ пысăк çĕнтерÿсем тунă партисемшĕн пани те ахалĕн пулман. Суйлавсен иккĕмĕшпе виççĕмĕш турĕсенче те фашисăма хирĕç кĕрешекен партисем унтан кайа мар çĕнтерÿсем тăвасси пирки ним иккĕленмели те çук.

Чехословакири суйлавсен пĕрремĕш турĕ пĕтĕмпех урăхла условисенче пулса иртнĕ. Никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн пысăк хăрушлăх çĕршывра çак кунсенчи пек нихçан та пулман. Германи фашисăмĕ Чехословаки çине тапанма хатĕрленет. Гитлерла агентура — Гейнлен партийĕ Судет Нимĕç облаçĕнче хăйĕн тискерле ĕçĕсене сарнă. Вăл хăйĕн провокацилĕ ĕçĕсемпе Германи Чехословаки çине тапанмали майсене хатĕрлĕне тата хатĕрлет те.

Германи фашисăмĕ хăйĕн çарĕсене Чехословаки чиккине куçарма тытăнчĕ. Чикĕри районсене запасра тăракан офицерсене мобилизацилене, вăрçа хатĕрленессипе вăл тата ытти ĕçсене те туса ирттернĕ.

„Нейе Цÿрихер Цейтунг" хаçатăн Венари корреспонденчĕ çырса пĕлтернĕ тăрăх, Австри йенче тăракан Чехословаки чиккинчи районсенче чăн-чăн вăрçа вăхатĕнчи йĕркене туса хунă.

Гитлерĕн союзникĕ — Польша та хăйĕн çарĕсене Чехословаки чиккине пуçтарнă. Польшă хаçачĕсем Германи хаçачĕсене кура, Чехословакине хирĕç вăйлă кампани сарнă. Польшăн „Биленское слово" тата ытти хаçачĕсем те Польшă Чехословакине валеççе пĕтерессе тата Венгрипе пĕр чикĕ туса хурассине кĕтет, тесе уççăнах пĕлтереççĕ.

Германи фашисăмĕ Чехословаки çине тапанма хатĕрленес ĕçре фашисла Италинчен тивĕçлĕ пулăшу илет.

Чехословакине туртса илессине пурнăçа кĕртме пулăшу илесси çинчен Гитлер майăн пуçламĕшĕнче Италире пулнă чухнех Муссолинипе калаçса татăлнă. Çак калаçу хыççăнах тухса калана хăйĕн сăмахĕнче Муссолини Францине айăпласа çакна пĕлтернĕ: Франци Испанири фашисла пăлхавçăсем йĕнне уççăнах тăраччĕн, Франципе Итали хушшинче ку таринччен йĕркелĕ пулса пынă калаçусене вĕçне çитерме май çук. Нумай та пулман Италире Франци чикки çывăхĕнчи, Италин Генуйера вырнаçнă хăватлă тинĕс флочĕ, ку районра нумай вăхăглăха йулни çинчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Итали фашисăмĕ, Чехословаки республикĕ çине Германи вăрçăпа тапанма тытăнсан, Франци Чехословакине пулăшу парассине çĕмĕрес шутпа Францине хĕстерсе пырать.

Агрессăрсен хăрушлăхне уççăнах курса, Чехословаки правительстви Судет Нимĕç облаçĕнче çирĕп йĕрке тăвас, фашисла Германипе Польшă йенчен тапанма хатĕрленекенсене отпор пама хатĕрленес шутпа чылай татăклă ĕçсем туса ирттерме йышăннă. Чехословакин оборонă министрĕ резервра тăракансенчен пĕр çултисене çара илнĕ, тата çакăн пекех Судет районĕсенчи çар гарнизонĕсене те вăйлатнă. Республикă çине вăрçăпа тапаннине хирĕç тăрас йĕнпе çак ĕçсене туса ирттернипе вăл правительствă татăклăн хатĕрленсе пынине кăтартса пачĕ. Кунпа пĕрлех вăл Чехословаки Австри мар иккенне, Чехословаки халăхĕ хăйĕн никама пăхăнасмарлăхне алăри хĕç пăшалпа сыхлама хатĕр тăнине демонстрацилерĕ. Правительствă туса ирттернĕ ĕçсене халăх пĕр шухăшлăн пулса йышăннă. Фашисла агрессăрсене хирĕç кĕрешекен, демократипе тата мирлĕ пурнăçа сыхлассишĕн тăракан пур çĕршывсем те ку ĕçсене ырă кăмăлпа-шухăшпа кĕтсе илчĕç. Правительствă туса ирттернĕ ĕçсене йышăннă хыççăн, унăн авторитечĕ те вăйлăн ÿсрĕ, тесе çыраççĕ Чехословакин демократилĕ хаçачĕсем.

Фашисла агрессăрсем Чехословаки çине тапанас хăрушлăхсем умĕнче Англипе Франци правительствисем посредниксем вырăнĕнче шутланаççĕ. Гейнлейн ыйтнисене йышăнтарас шутпа Чехословаки правительствине питĕ хытăн хĕстернĕ пулнă. Тапанакансем çĕнĕ вăрçа хатĕрленнĕ пирки Англипе Франци халăхĕсем хăйулă хумханнă май, Англин „ку конфликта та мирлĕ йĕркепе татса парасси" çинчен Германине сĕнÿ памала тивнĕ.

Суйлавсем йĕркелĕ иртни Чехословакин тата йут çĕршывсен хăшпĕр пичет органĕсене хăрушлăх кĕтни, йе вăрăм срукла хăса куçни çинчен калама май панă.

Анчах, чăнлăх ку суйа сăмахсене хăвăрт сирсе пăрахрĕ. Германи фашисăмĕ хушнипе хăйĕн агенчĕ Генлейн Чехословаки правительствинчен Судет районĕсенчен çарсене кăларма ыйтнă. Çакнашкал ыйтăвах Германи правительстви официаллă йĕркене тăратнă. Ку ыйтусен тĕп шухăшĕ пуçпех паллă. Германи фашисăмĕ Чехословакине хĕçпăшаллă майпа туртса илес тĕлĕшпе хăйĕн задачине çăмăллатма шутлать.

Агрессăр пирки хăйĕн каварлă политикĕшĕн шанчăклă тăракан Англи правительстви ку ыйтăва майлă калаçнă. Унтан та ытларах. Çак ыйтăва хирĕç вăйлă отпор парас выранне, суйлавсен çитес тапхăрĕсенче Судет районĕсене йатарласа „Нейтральнăй" комиссийарассине хирĕç пырать.

Чехословаки правительстви „вак халăхсен" прависем çинчен çĕнĕ саккун хатĕрленĕ. Ку саккун çĕршывра вырнаçакан пур „вак халăрсен" прависене демократилĕ йĕкепе татса парать. Анчах Гейнлейн çак саккунпа килĕшмесĕр, Чехословаки премьер министăрĕ Гофнапа калаçнине сырлахмасăр йулса, вăл хăйĕн партийĕ тăратнă „программăна" пурнăçа кĕртессишĕн тăнине пĕлтернĕ. Вăл программăн тĕп тĕлĕвĕ — Судет Нимĕç облаçĕнче Германири пек фашисла диктатурă тăвасси пулать. Ăна татса пани, паллах, Чехословакине чăн-чăнах валеççе хунине пĕлтерет.

Гейнлейн майăн 26-мĕшĕнче Англири „Дейли мейль" хаçатăн корреспонденчĕпе калаçнă чух çапла пĕлтернĕ: вăл ыйтнисене çителĕклĕн татса параймасан фашисла Германи ыйтăва вăрçăпа татса парать.

Чехословаки пирки ĕçсем çивĕчленсе пыраççĕ. Малта йăвăр кĕрешÿ тăрать. Чехословаки халăхĕ хăйĕн никама пăхăнасмарлăхне агрессăр умĕнче пуç тайнипе мар, ăна çирĕп отпор парас çул çинче тăрса сыхламалине пĕлет.

Чехословакири хăшпĕр партисем, сăмахран, аграриссен партийĕ, тытнă çулйĕр, Англи консерватăрĕсем тĕртекен çул çĕршыва вилĕм патне илсе пыма пултарнине халăх лайăх ăнланать. Чехословакине ăнсăртран тапанса илме май пуррине, тапăнакансене хирĕç татăклăн кĕрешме халăх хатĕр маррине пĕлет пулсан, Германи агрессăрĕсене хăйсен ĕççене тума нимĕнле сăлтавсем те тытса чараймаççĕ.

Чехословаки халăхĕ хăйĕн никама пăхăнасмарлăхне çирĕп тытса тăрассине фашисăма хирĕç кĕрешекен вăйсене пĕтĕçтернипе, çĕршывăн оборонине тĕреклĕтнипе, агрессăра вăйлăн хирĕçленипе тата ăна парăнакансене отпор панипе анчах пурнăçа кĕртме пултарать.

# ПĔЛТЕРÛ

Июнĕн 11-мĕшĕнче каçхине 7 сехетрен 9 сехетчен ПСК(б)П Обкомĕн парти вĕренÿ çуртĕнче çак темăпа консультаци пулать. „Автономные республики и области, входящие в РСФСР".

Парторганизатăрсен тата парти комитечĕсен çекретарĕсен суйлав участкисенче ĕçлекен агитатăрсене консультацине пымала.

ПСК(б)П Хула комитечĕ.
Парти вĕренÿ çурчĕ.

Отвечлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.


## Пур шоферсене те тата автохуçалăхсен руководителĕсене те

1938 çулхи июнĕн 12-мĕшĕнче, кăнтăрла 11 сехетре „Динамо" клубĕнче (НКВД, вход с Ярославской улицы) Шупашкар хулинчи шоферсен тата автохуçалăхсен руководителĕсен канашлăвĕ пулать.

Шоферсен тата автохуçалăх руководителĕсен хăйсен обйазательнă пымала.

ПСК(б)П Обкомĕн промышленнăçпа транспорт пайĕ.
Рабочисемпе Хресченсен Милици Управленин Госавтоинспекци.
2—1

| Пайан кино-театрта | саслă, çĕнĕ кино-фильм „год 19 ый" |
|---|---|


Уполномоченный Чувашглавлита № 286 13

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтрест. Заказ № 500.